

СЕНТЯБРЬ 9
1963



# ПИОНЕРСЕН ЮРРИ

Анисим АСЛАМАС кĕвви

Георгий ЕФИМОВ сăвви

1. Эпир пурте паттăр,
Пурте маттурсем.
Кунсерен ĕçре
Вăй илеç чунсем.
Пурнăç çулĕ такăр,
Ан ӳркен кăна.
Пуласси пире
Уççăн курăнать.

Хушса юрламалли:

Пионер, пионер!
Аслă Ленин ялавĕ санра!
Пионер, пионер!
Ялава çирĕп тыт алăра!

2. Çăлтăрсем чĕнеççĕ
Аслă уçлăхран.
Кайăпăр вĕçсе,
Тăван çĕр хушсан.
Эпир çирĕп тытнă
Аттесен ĕçне.
Парти сăмахне
Илнĕ чĕрене.

Хушса юрламалли:

Пионер, пионер!
Аслă Ленин ялавĕ санра!
Пионер, пионер!
Ялава çирĕп тыт алăра!

*ПЕРРЕМЕШ КЛАСА!*
*В. Исаевпа А. Припалов фотоэтючĕсем.*






*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

ЯЛАВ

Чăваш писателĕсен Союзĕ уйăхра пĕрре ӳкерчĕксемпе кăларакан илемлĕ литературă тата обществăпа политикă журналĕ

№ 9 (407)
СЕНТЯБРЬ 1963

*XXXIX çул тухать.*



# «Тӳпери тӑвансен» пӗрремӗш йӑмӑкӗ



*Валентина Терешкова*

### САЛАМ, АТӐЛ!

КАШНИННЕХ пирӗн тӑван хуламӑрта, тӑван ялӑмӑрта чи юратнӑ, чӗрене çывӑх кӗтес пур. Унӑн вара, çак сӑпайлӑ та кӑмӑллӑ хӗрӗн, ватӑ Ярославльти чи юратнӑ вырӑнӗ пурте лайӑх пӗлекен Стрелкӑ — Атӑл хӗрринчи çӳллӗ сӑмсах.

Кунта вӑл ватӑ йӑмрасене пӑхса савӑннӑ, портри «ӗçчен» крансем шавӗпе киленнӗ, ӳссех пыракан хулан çӗнӗрен те çӗнӗ çурчӗсене курса хавхаланнӑ! Лере, ав, тӑван «Красный Перекоп»; ун мӑрьисем тӗтӗм мӑкӑрлантараççӗ...

Мӗн кӗçӗнрен пех кӗнекепе туслӑ хӗр. Вӗсенчен пӗринче, темиçе вунӑ çул каялла кӑларнӑскерӗнче, вӑл хӑй çуралса ӳснӗ тавралӑх çинчен акӑ мӗн вуласа пӗлнӗччӗ: «Атӑл леш енӗ — ирӗк, аслӑ çӗр-шыв... Авалхи унта Руç, ӗлӗкхи. Мӗн вырӑс çӗрӗ пуçланса кайнӑранпа та унта ют вӑрӑ-хурах апхасман. Мӗн ӗлӗкрен кунта Руç тасан упранать».

Пайтах улшӑннӑ ӗнтӗ унтанпа Ярославль тӑрӑхӗ. Çамрӑкланнӑ вӑл, ешерсе чечекленет; индустри çӗршывӗ! Çак тӑван çӗршӗн Валентина ашшӗ — Владимир Аксенович Терешков — фронтра паттӑрсен вилӗмӗпе вилнӗ.

Виçӗ пӗчӗк ачапа хӑраххӑн тӑрса юлнӑ вара Елена Федоровна.

— Куççульпелен хуйха çӗнтереймӗн,—лӑплантарнӑ ӑна кӳршисем.— Эсӗ, ак, мӗнле ту: кайса пӑх-ха, Федоровна, аппу патне Ярославле, ют мар, пулӑшӗ тен...

Тӑлӑха юлнӑ салтак кил-йышне хулана ӑсатма Масленниковӑ çыннисем ялӗпе тенӗ пекех тухнӑ.

...Тӳлек те кӑмӑллӑ ир. Чечексем çинче, симӗс курӑк çинче, такам кӗмӗл шӑрça сапса янӑ пек, сывлӑм шывӗ йӑлтӑртатать. Хӗвел тухрӗ те тӗтре сирӗлчӗ, ӗнтӗ инçетри-инçетри курӑнать. Кӑвак, кӑвак... Атӑл кукри те инçетри хыр вӑрманӗ пек кӑвак. Сенкер тӳпере çӑлтӑрсем ирӗлеççӗ.

Ачалӑхне, хӑйӗн çамрӑк ӗмӗрне аса илсе шухӑша кайнӑ Вальӑ уçӑ, сипетлӗ сывлӑша кӑкӑр туллин сывласа илчӗ те кӑшт çеç илтӗнмелле çапла каларӗ:

— Салам, ир! Салам, ман тӑван Атӑл! Нумай пулатчӗ сана курманни.

Чылайччен тӑчӗ хӗр шыв хӗрринче. Мӗн çинчен шухӑшланӑ эсӗ, Вальӑ, çав ир! Тен, хӑвна ху: «Тӗрӗс çулпа утатӑп-ши эп, мӗн ӗмӗтленни-им ку!»— тесе тӗрӗсленӗ!..

### ХАВАСЛӐХ ТУЙӐМӖ

Çапла, çӑмӑл çул суйласа илмен эсӗ. Астӑватӑн-и çамрӑксен «Юность» хаçатӗнчи заметкӑна!

«Нимӗнпех те паллӑ мар, «шупка» кунсем пулаççӗ. Вӗсем иртсе кайнине календарӗн татса илнӗ страници çеç аса илтерет. Кусем вара, паянхи пеккисем, хӗвел çутинче, çиле çӗнтерсе вӗçсе иртеççӗ, çывӑх юлташ алӑ чӑмӑртанӑ евӗр, санра хаваслӑх туйӑмӗ хӑвараççӗ.

...Вальӑ Терешковӑна, «Красный Перекоп» комбинат комсомол организацийӗн секретарьне, хулара кӑна мар, облаçра та аван пӗлеççӗ. Анчах Вальӑ тахçанах ӗнтӗ хӑйӗн ӗмӗтне сенкер тӳпене панине пӗлеççӗ-ши пуртех те! Паян унӑн кунӗ. Паян ун виçӗ хутчен парашютпа сикмелле...»

Ун чухне Вальӑ тусӗн, Таньӑ Торчиловӑн, кӑтартӑвӗсем аванрах пулнӑ: парашютпа вӑл малтан палӑртнӑ вырӑна пуринчен çывӑх, пуринчен тӗл анса ларнӑ. Таньӑ художествӑ училищинче вӗреннӗ-ха.

Сывлӑшра парашютсем сасартӑк теме тӗтӗм хыпса илнӗ пек уçӑла-уçӑла кайнӑ. Хӗрсен чунӗ-чӗрисенче çӗнтерӳ туйӑмӗ тапнӑ. Тӗрӗс, пӗр хутӗнче таçтан килсе тухнӑ çил Вальӑна ӗне кӗтӗвӗ çине илсе кайнӑ. Анчах хӗр аптраса ӳкмен. Çӗр çине ӑнӑçлӑ, тӗрӗс-тӗкелех анса ларнӑ.

— Маттур, Вальӑ!— ырлӑнӑ ӑна Станислав Морозычев конструктор.— Пулкалать вӑл малтанах унашкалли!..

Кӑмӑл туртнипе, чӗре чӗннипе çапла çывӑххӑн туслашрӑн эсӗ, Вальӑ, сенкер тинӗспе.

...Пуçланасса вара мӗн пурӗ те пӗчӗк кӑна япаларан пуçланнӑ. Пӗррехинче 2-мӗш номерлӗ фабрикӑра пӗлтерӳ çакӑнса тӑнӑ: каччӑсемпе хӗрсене ДОСААФӑн тӗрлӗрен кружокӗсене кӗме чӗнсе çырнӑ пулнӑ унта. Вальӑна пӗр йӗрки кӑмӑла килнӗ-мӗн: «Парашют спорчӗн кружокӗ».

— Эпир тӗлӗнеттӗмӗр,— каласа парать Вальӑн тепӗр тусӗ, комбинатри комсомол комитечӗн хальхи секретарӗ Вальӑ Глызина,— ытла таçта та ӗлкӗретчӗ-çкеха пирӗн Терешкова: ӗçлет, вӗренет, киленче те ӑна-кӑна пуçтарсах, тирпейлесех тӑмалла... тата парашют.

Çапла, пур çӗрте те ӗлкӗрнӗ эс, комсомол секретарӗ. Сана кура ытти çамрӑксем те вӑй хурса тӑрӑшнӑ.

### ЕЛКЕР КӐНА!

Пирӗн алӑра Вальӑ çырса пынӑ блокнотсем.

«25-мӗшӗнче кӗнеке пасарӗ ирттермелле». «Парашютистсен июнӗн 30-мӗшӗнче комисси çинчен пӗлмелле». «Рабочи çамрӑкӗсен шкулне 500 çынна явӑçтармалла». «Туристсен лагерьне комсомол комитечӗн представителӗсене ямалла»...

Мӗн каласси пур, ӗç нумай! Анчах сана актив пулӑшать-çкеха, тусусем, юлташусем пулӑшаççӗ. Пур ӗçре те парти организацийӗ кӑтартса пырать. Тӑрӑш, ӗçле. Çапах та йывӑр. Çулталӑкран эсӗ çапла каланӑччӗ:

— Хуть те кирек мӗнле урӑх ӗçе ярӑр мана...

— Çук, — терӗç комсомолецсем,— эпир сана шанатпӑр, хисеплетпӗр сана, каллех пирӗн секретарь пулӑн.

Каллех ӗç мӑй таран: «Самрӑк текстильщиксене ӗç тухӑçлӑхне ӳстерме мӗн кансӗрлет!» «Хӑвартрах хаçат-журнал çырӑнтарса пӗтермелле». «Çамрӑксен общежитийӗнче 20-мӗш пӳлӗмре сӗтел-пукан çук». «19-мӗш пӳлӗмре репродуктор лартмалла». «Стилягӑсене, прогульщиксене, брак тӑвакансене питлекен щитсем хатӗрлемелле».

Комсомол комитечӗн секретарӗн нумай пӗлмелле. Ахальтен мар ӗнтӗ эсӗ блокнота Ленин каланине çырса хунӑ: «Коммунистом стать можно лишь тогда, когда обогатишь свою память знанием всех тех богатств, которые выработало человечество».

Эпир сан блокнотусенче, Валентина, нотӑсем, самолетсемпе парашютсен ӳкерчӗкӗсене куртӑмӑр. Сывлӑш спортсменӗ пулма эсӗ тахçанах ӗмӗтленнӗ-мӗн. Ахальтен мар блокнотсенче тӗрлӗрен формулӑсем нумай. Ахальтен мар эсӗ çӑлтӑрсем патне çӗкленмешкӗн пӗрремӗш утӑм тума пулӑшакан парашюта чунтан юратнӑ!

### ТЕЛЕЙ ÇӐЛТӐРӖ

Ку çурта шырама кирлӗ мар. Ун чӳречисем фабрикӑ корпусӗсем еннелле тухаççӗ. Фабрикӑ çурчӗ çинче пысӑк кӑна сехет. Çирӗм çул хушши çав сехете пӑхса тӑрса пуçтарӑннӑ ирсерен Елена Федоровна, ачисене шкула ӑсатнӑ, халӑхпа пӗрле фабрикӑна васканӑ. Иртнӗ çул вара врачсем ӑна çапла каларӗç:

— Ӗçлесе çитет сана, Елена Федоровна,— терӗç, — ӗнтӗ канмалла.

Эпир унпа хӑйсен çурчӗ умӗнче калаçса ларатпӑр. Елена Федоровна пӗр хушӑ чирлесе пурӑннӑ-мӗн: мамӑк тутӑр пӗркенне.

— Кичем ӗççӗр ларма,— ӳпкевлӗн калать вӑл,— ал ӗç патнех туртӑнать, анчах, ав, сывлӑх япӑхланчӗ.

Ху сисмесӗрех тенӗ пек ун кунçулӗ çинчен шухӑшлатӑн. Пӗччен, упӑшкинчен тӑлӑха юлса, виçӗ ача пӑхса çитӗнтерсе çын тунӑ! Кам, мӗн пулӑшнӑ ӑна! Тен, кун çинчен пичӗ çинчи пӗркеленчӗксем каласа парӗç!

Ун упӑшки — Владимир Аксенович машин тӗлӗшӗнчен ӑста пулнӑ. Кӗрнеклӗ çын. Çӳллӗ, çирӗп сывлӑхлӑ, кӑтра. Юратса, килӗштерсе пурӑннӑ вӗсем пӗр-пӗринпе. Владимир Аксенович нихçан никама усал туман, кашни çынна ырӑ тума хатӗр пулнӑ. Вӑрçа кайрӗ те таврӑнмарӗ.

Кил нуши амӑшӗ çине тиенчӗ. Йывӑрччӗ питех. Илсе килет те тепӗр чух Елена Федоровна хӑйӗн пай çӑкӑрне, ачисене валеçсе парать, хӑйне тӗпренчӗк те хӑвармасть. Çакна чи малтан Вальӑ асӑрхать.

— Анне, эпӗ тутӑ, çи ху.

Амӑшӗ, хӗрӗ куриччен, куççульне шӑлса илет.

— Ачасем мӗн тери телей ик кенне эпӗ шӑпах çав çулсенче ӑнланса илтӗм,— тет халӗ, ӑшшӑн кулса, Елена Федоровна.— уйрӑмах хӗрачасем, нумай пулӑшаççӗ вӗсем килте.

Терешковӑсен кил-йышӗнче чи кӑмӑлламанни «тӳрпилӗк» сӑмах пулнӑ. Кунта пурне те каçарма пултарнӑ, анчах кахаллине мар. Елена Федоровна ачисене пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗнех урай çума, апат хатӗрлеме, пахчара ӗçлеме, чӑлха-нуски саплама, кӗпе-тумтир якатма вӗрентсе-хӑнӑхтарса пынӑ.

— Çитӗнсе çитсе çын пулчӗç ӗнтӗ. Хампа пӗрле пурӑнаканни Володьӑ çеç, шофер. Йӗркеллӗ йӗкӗт: усалне нихçан туман,— каласа парать Елена Федоровна.— Людмила качча кайрӗ, инçех мар пурӑнаççӗ, кашни кун пекех килсе курать. Валюшӑ çеç хамран аякра, анчах вӑл та манмасть. Кӗç çыру илетӗп унран, кӗç почтальон посылкӑ илсе килет. Ятлатӑп ӑна: «Маншӑн эс, хӗрӗм, ан пӑшӑрхан!»— тетӗп. Анчах итлӗ-и! Хӑйӗннех! Хӑй шухӑшӗнчен нимпе пӑраймӑн.

Елена Федоровна Вальӑ хӑй парашютпа сикнине пытарма хӑтланса пӑхнине аса илчӗ. Çук, пытараймӑн аннерен, ун куçӗ çивчӗ. «Вӑртӑнлӑх» уçма тивнӗ Валентинӑн.

— Ирхине ирех вӑрататтӑм вара. Йӑпӑр-япӑр тумланать те тухса чупать. Каçхине хавхаланса таврӑнать, калаçать, шӳтлет: «Атя, анне, манпа, пӗрле сикӗпӗр». Тепӗр чух: «Кама хывнӑ, кам пек пулнӑ эс çакнашкалскер!»— тетӗм. Асту, аптӑраса ӳкӗ! Çавӑнтах тавӑрса калать. «Сана хывнӑ, анне, йӑлтах сан пек пулнӑ!»

— Ӗнтерсе пыракансене «кӗпепе çуралнӑ» теççӗ,— малалла каларӗ Елена Федоровна.— Юлашки отпускра киле килсен, Вал ӑна тусӗсенчен пӗри шӑпах çапла каланӑччӗ. Пӗлетӗр-и, мӗн терӗ Вальӑ! «Эпӗ телей çӑлтӑрӗ айӗнче çуралнӑ,— терӗ.— Манӑн хресна атте Валерий Чкалов пулнӑ. Вӑл пирӗн хулана килсе кайнӑ».

Чӑн, 1937 çулта Чкалов Ярославль хулинче пулса курнӑ. Хула çыннисен митингӗнче вӑл хӑй Çурçӗр полюсӗ урлӑ Америкӑна вӗçни çинчен каласа кӑтартнӑ. Совет Союзӗпе тивӗçлипе мухтанса, вӑл ун чух çапла каланӑ: «Америкӑра пирӗн çинчен, телейлӗ çынсем, телей çӑлтӑрӗ айӗнче çуралнӑскерсем, тесе калаçрӗç. Йӑнӑшмарӗç пулӗ тетӗп. Пирӗн пилӗк юплӗ çӑлтӑр. Телей çӑлтӑрӗ».

### «КРАСНЫЙ ПЕРЕКОП» ХӖРЕ

Çапла пулнӑ. Пӗррехинче «Красный Перекоп» комбиначӗн партком секретарӗ Валентина Федоровна Усова патне комсомол райкомӗн секретарӗпе, Юлия Батуринӑпа, çӳлех мар сӑпайлӑ хӗр кӗрсе тӑнӑ.

— Комсомол секретарьне суйлама кандидатура пур,— тенӗ Ю. Батурина.

*производствă управленийĕнче*

# ÇУЛСЕМ, ĔÇСЕМ...

— Юрать-и кĕме?

— Мĕншĕн ан юратăр? Кĕрĕр, кĕрĕр...

Председатель пӳлĕмне вăтам çулсенчи колхозник кĕрсе тăрать, ăшшăн алă тытса сывлăх сунать, унтан васкамасăр пукан çине пырса ларать.

— Мĕн ĕçпе?

— Прицеплă автомашинă е трактор кирлĕччĕ те... Пĕренесем турттарас тетĕп.

— Инçетрен-и?

— Çук, пит инçех мар...

— Кĕтӳре ахалех лашасем çӳреççĕ. Хăшĕ кăмăла каять, çавна кӳлсе кай,— председатель колхозник çине кăмăллăн пăхса кулса илет. Колхозниксем утсене килĕштерсех кайманнине аван пĕлет-ха вăл, çапах та сĕнме пăрахмасть.

— Хăвах шутла, Николай Петрович. Лавпа турттарас пулсан, пилĕк фесметра пилĕк кун турттармалла-çке-ха. Пилĕк кун колхоз ĕçне хутшăнаймастăп. Машинăпа илсе килме пурĕ те икĕ сехет çеç кирлĕ.

— Ăнланатăп: тĕрĕс калатăн. Турттар, эппин, автомашинăпах,— хаваслăн кулса илет Николай Петрович, колхознике алăкран кăларса янă май. Унтан хăйĕн сĕтелĕ хушшине каялла пырса ларать те сăмах пуçлать:

— Те вуннăмĕш çын пулчĕ ку паян, те вун иккĕмĕш. Кашнинех мĕн те пулин кирлĕ: пĕри йывăç, тепри машинă ыйтать. Мĕн тăвас тетĕн, кирлипе çӳреççĕ. Пӳрт лартаканни пӳрт лартать, юсаканни юсать. Ан тив, майлаччăр ĕнтĕ вăй çитнĕ чух.

— Ăçта пăхнă унта çĕнĕ пӳрт. Председатель çеç çĕнетме шутламасть,— сăмах хушать колхоз агрономĕ Герман Павлович Павлов.

— Мĕнле шутламастăп пултăр? Çенĕхе юсаттаратăп-çке!— шӳтлесе хуравлать Николай Петрович.— Тӳперен çумăр анмасть, пĕренисем çĕрмен, тăвăр мар. Пӳрт хамăн ĕмĕре çитет-ха манăн...

Çирĕм икĕ çул хушши председательте ĕçленĕ май Николай Петрович тахçанах ĕнтĕ кермен пек çурт хăпартма пултарнă. Председателĕн килĕ-çурчĕ ыттисенчен нимĕнпе те уйрăм мар. Йăлтах урăхла, хăйсен урамĕнче те, ытти урамсенче те йĕрки-йĕркипех çĕнĕ пӳртсем. Пĕри тепринчен капăр. Председатель пӳрчĕ вĕсен хушшинче çухалса каять.

Пӳрт çинчен сăмах тапратнăран пулас калаçăва партком секретарĕ Павел Евдокимович Кошкин та хутшăнчĕ:

— Халь кил-çурт çавăрасси темех мар. Колхоз кивçен укçа та, йывăç та парса пулăшать. Турттарма лаша мар, тӳрех машинă ыйтаççĕ. Вунă çул каярах мĕнле хурлăхпа пӳрт лартни çинчен манса кайрăмăр. Ун чухне машинă мар, лаша парсан та, вĕçсе кайма хатĕр пулнă.

— Тĕрĕс, Павел Евдокимович, питĕ тĕрĕс,— унпа килĕшсе сăмахларĕ пĕр бригадир.

— Çапла ĕнтĕ. Ун чухне эпир техникă хуçи пулман. Халĕ хамăрăнах акă машинасем вăтăрмĕш çулсенче МТСра пулнинчен ытларах. Çакă вăл, ман шутăмпа, Совет влаçĕ колхоз хресченĕсене юлашки çулсенче панă чи пысăк тивлетсенчен пĕри пулчĕ. Кашни колхозник ăна лайăх туять,— шухăша кайса калаçрĕ Николай Петрович.

Бригадирсем пухăнса çитсен, нарядсем парас ĕç пуçланчĕ. Нумай калаçмаççĕ кунта, пĕр-пĕрне çур сăмахранах ăнланаççĕ. Вăхăта перекетлеме тăрăшни кĕретех сисĕнсе тăрать.

...Правленирен инçех те мар пĕр çамрăк колхозник капăр пӳрт лартать. Платниксем каçхи апат умĕн ĕçе пăрахса пĕрене çине пуçтарăнса ларнă. Пирус мăкăрлантараççĕ. Хĕвел тухиччен ĕçе тытăннăскерсен, çуллахи вăрăм кунра ывăнмалăх пур çав ĕнтĕ. Халĕ тимлесех хăйсен колхозĕн, «Самолет» артелĕн, юлашки çулсенчи ӳсĕмĕсем çинчен сăмахлаççĕ.

— Тепĕр чухне кӳршĕ колхоз çыннисемпе тĕл пулатăн та, кашнинчех вĕсем «Самолета» мухтаса калаçнине илтетĕн. Ăмсанаççĕ тата: вăйлă пурăнатăр эсир, теççĕ,— сăмахĕсене майĕпен шутарса калать вĕсенчен пĕри — Никандр Игнатьевич, шухăша кайса.— Шутласан, мĕн-ха, вăй пĕлĕт çинчен татăлса аннă-им пирĕн? Пурне те хамăр вăйпа, хамăр алăпа тунă. Чăнах та, председатель аван. Халăха ертсе пыма, халăхшăн тăрăшма пĕлет. Астăватăп-ха, 1941 çулта, эпир фронта тухса кайнă чухне, Николай Петрович питĕ чирлĕччĕ. Вăрçăран таврăннă çĕре вăл сывă юласса шанман та эпир. Шăпах вăрçă тухнă çулхине ăна председателе суйларăмăр. Йывăр пулнă, чăтнă. Тен, çавăн пек чух çынна вăй кĕрет пулĕ,— халтан кайма пуçланине çĕнтерме вĕрентет. Николай Петрович çирĕм икĕ çул ĕнтĕ пĕр улшăнмасăр колхоз председателĕнче ĕçлет. Халĕ кашни колхозник ун пирки: «Эх, тепĕр вунă çул та пулин ĕçлетĕрччĕ», тесе ĕмĕтленет.

Коммунист пурнăçра мĕнле пулмаллине илес пулсан, Николай Петрович — лайăх тĕслĕх. Калама çук сăпайлă, çав тери тӳрĕ кăмăллă çын вăл, чунĕ-юнĕпе халăхпа çыхăннăскер. Уншăн государствă интересĕнчен пысăкраххи нимĕн те çук, пулма та пултараймасть.

Акă пĕр тĕслĕх. Пысăк тухăçлă сĕс-кантăр акса çитĕнтернĕшĕн унăн колхозран виçĕ пин тенкĕ ытла преми илмелле пулнă. Ку саккуна пăсни пулмасть, йĕркине партипе правительствă туса çирĕплетнĕ. Анчах Николай Петрович илмен. Вăл колхозниксен пухăвĕнче çапла каланă:

— Юлташсем, эпĕ кантăр акман, татман, хутман, сӳс туман. Мĕншĕн-ха мана çавăн пек пысăк укçа памалла? Мана тивекен тӳпене вылььăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе яма ыйтатăп.

Колхозниксем килĕшнĕ, хăйсен председательне тата ытларах хисеплеме пуçланă. Председателе кура ыттисем те вара çавăн пек тунă.

Мĕнле-ха капитализм тĕнчинче? Çак йăпалана çырнă хушăра эпĕ «За рубежом» журнала вуламан пулсан, тен, кун пек ыйту сиксе те тухман пулĕччĕ. Асăннă журналăн кăçалхи 27-мĕш номерĕнче Америкăри паллă журналист Фред Кук çырнă «Общества коррупции» ятлă статья пичетленнĕ. Ăна Нью-Йоркра тухса тăракан «Нейшн» журналтан илсе пичетленĕ.

Çак статьяра эпир акă мĕн вулатпăр. Аллă çулхи негр Дуглас Джонсон, дворникра ĕçлекенскер, пĕррехинче çулпа пынă чух 240 пин доллар укçа тупнă та çавăн çинчен полицие пĕлтернĕ. Укçи «Бринкс» фирмăн пулнă. Джонсон укçана каялла тавăрса панă. Вăл çапла калать:

«Камран та пулин ĕç ыйтсан, халĕ мана темĕн те пĕр каласа кӳрентереççĕ, ухмах тесе кулаççĕ. «Мĕне кирлĕ сана ĕç? Сан 240 пин доллар пулнă вĕт-ха», теççĕ. Çав укçана куçпа курас пулман хăть. Мĕншĕн вăл ман тĕле пулчĕ-ши, мĕншĕн ăна илсе хутăм, мĕн-ма курмăш пулса иртсе каймарăм, пĕреххут?— тесе пĕрре мар шухăшланă эпĕ. Çав укçах мана мĕскĕне кăларчĕ».

Мул пуç пулса тăнă çĕршывра çул çинче тупнă укçана тавăрса панине пуянсем çылăх вырăнне хурса шутлама хатĕр. Ав епле вăл — капитализм тĕнчи. Совет çыннисем çак чуна хĕсекен хуйăртан хăпса пыраççĕ. Ун пек тĕслĕхсем пирĕн темĕн чухлех. Николай Петрович укçа пирки хăйне тыткалани те çав ырă тĕслĕхсенчен пĕри пулать.

Пĕррехинче Николай Петрович урампа иртсе пынă. Пăхать, пĕри мунча пек пӳрт лартать. Кашти таран мăкласа çитернĕ.

— Усăп, мĕн тăватăн эсĕ?

— Пӳрт лартатăп.

— Колхозра ĕçлеместĕн-им?

— Ĕçлетĕп те, вăй çитмест-ха.

— Правленире пултăн-и эсĕ?

— Пурте пырса чăрмантарсан, ĕçлеме вăхăт та юлмасть сан.

— Акă мĕн. Колхоза та, хăвна та намăс ан кăтарт эсĕ. Халех сӳтсе пăрах. Ыран правление пыратăн. Итлемесен, ку пӳрте ав çавăнта, вăрман хĕррине, кайса ларт. Кун пек çуртсенче пурăнма колхоз чухăна юлман-ха пирĕн.

Тепĕр кунах вара правлени Усăп ыйтăвне пăхса тухать. Правлени членĕсем пĕр кăмăллăн йышăнаççĕ: «Усăп валли пӳрт лартма ыранах йывăç патне трактор кăларса ямалла, пӳрт лартма тăватă пин кивçен парса пулăшмалла». Усăпĕ халĕ ултă кĕтеслĕ хӳхĕм çуртра пурăнать.

Вăрманкас ялĕнче тата çакăн пек сăмах çӳрет. Пĕр колхозницă правлени çурчĕ патне хăйĕн ĕнине çавăтса пынă.

— Юрать, выльăх йышăнакан пункта кайса патăн, тейĕпĕр. Ачусем çук-и сан?— ыйтать председатель.

— Ачисем пур-ха та, ĕни сĕт памасть-çке.

— Акă мĕн, ку ĕнене халех фермăна кайса пар. Пирĕн государствăна çав-çавах аш-какай сутмалла. Ун вырăнне урăх ĕне паратпăр сана.

Çынсем ыррине юмах пек туса кăтартма тăрăшаççĕ. Колхозниксене ĕне вырăнне ĕне парса пулăшни чăнах та кунта сахал мар. Колхоз сĕт сахал антаракан ĕнесене усрамасть, пăрахăçлать ун пеккисене. Колхознике улт-çичĕ литр паракканни те çитет. Сĕт-çу ăна пасара тухса сутма мар, çиме кирлĕ. Колхозăн тына пăрусем çуллен хăйне кирлинчен ытларах пулаççĕ. Енесĕр колхозниксене кунта пăрусем парса пулăшасси те ырă йăла пулса тăнă.

Ĕçри ăнăçу бригадирсемпе фермă заведующийĕсенчен нумай килет. Колхозсем нумайăшĕ шултра. Ун пек çĕрте пĕр бригадах — ĕлĕкхи пĕр колхоз. Пĕчĕк артельсем пĕрлешсе пысăкланиччен вĕсенче кашнинчех председательпе заместитель, бригадирсемпе фермă заведующийĕсем, тепĕр çĕрте агрономпа зоотехник та пулнă. Халĕ вара çав хуçалăха пĕр çын — бригадир ертсе пырать. Лайăх организатор, паллах ĕнтĕ, бригадăна мала кăларать, ĕçкĕ-çикĕпе аташаканни е хăйĕншĕн ытларах тăрăшаканни япăхтарса ярать.

Бригадирсем суйласа илес, вĕсене ĕçе вĕрентес ыйту юлса пыракан хуçалăхсенче кăна мар, малта пыраканнисенче те çивĕч тăрать. «Самолет» колхозра та çак ыйту правление пĕрре кăна мар шухăшлаттарнă. Юлашкинчен çапла килĕшнĕ: бригадир отчетне бригадă пухăвĕнче итлемелле, ăна халăхпа суйламалла.

Кăçал çулталăк пуçламăшĕнче кунта бригадирсене пуçласа пухусенче суйланă. Мĕн тетĕр-ха? Пилĕк бригадиртан иккĕшне халăх çак ĕçре хăварма килĕшмен, вĕсем вырăнне урăх çынсене суйланă.

В. Щ. колхозник вун виçĕ çул бригадирта ĕçленĕ, бригадă хуçалăхне тытса пыма пĕлнĕ вăл, анчах та бригадă членĕсем ăна çав-çавах бригадирта хăварма кăмăлламан.

— Хăйне ытлашши мăнна хуракан пулчĕ,— тенĕ колхозниксем. Çынпа çынла калаçмасть, колхозниксене кӳрентерет, ĕç кунĕсене йĕркеллĕ шута илсе пымасть. Ĕçке ярăнчĕ, халăхран уйрăлса кайрĕ.

Хăйсен бригадирĕ пулнă çынна халăх тӳрленме сĕннĕ, усал тăвас темен ăна. Щ. вара çакна хăй майлă ăнланнă, правленипе партком çинчен таçта та жалобăсем çырма тытăннă. Мĕнле те пулин ĕç хушсан, тӳрех: «Вун виçĕ çул хушшинче эпĕ хура ĕç тума манса кайнă», тесе ответлет.

Кунта пĕр юмах аса килет. Пăрчăкан çĕрле çинçе урисене çӳлелле тăратса çурăм çинче çыврать-мĕн. Пĕррехинче ун патне кăвăлтăк пынă та тĕлĕнсе кайнă.

— Мĕн тăватăн эсĕ, тусăм?— ыйтнă кăвăлтăк.

— Пĕлĕте урасемпе тĕкĕлетĕп, унсăрăн йăтăнса анма пултарать,— тавăрса каланă пăрчăкан.

Мăнна тухса кайнă Щ-сем шăпах çавнашкал пăрчăкан еврĕлĕ. Халăх мар, вĕсем иккен кун-çул хуçисем. Авторитета ăна рычагпа хирсе çĕклеме çук, ĕçре хул-çурăма авса тупмалла. Колхоз председателĕ Николай Петрович Петров вара пачах та авторитетшăн хыпăнакан çын мар. Вăл икĕ суйлавра колхоз председательне вăрттăн сасăласа суйлама сĕннĕ. Колхозниксем ăна кашниччех пĕр кăмăллă пулса суйланă. Кăçал вара çапла каланă:

— Çитет, Николай Петрович, вăрттăн сасăласа аппаланма. Пурпĕр санах суйлатпăр.

Вăрман пек алă çĕкленнĕ. Каллех пурте пĕр сасăллă пулса председатель пулма ăна суйланă. Вăл обществă ĕçĕшĕн пурнăçне пама хатĕррине пĕлет-çке-ха халăх. Çирĕм икĕ çул артель хуçалăхне ертсе пырасси никамшăн та çăмăл мар. Çак хушăра отпускра пулманнине, канмалли кун курманнине шута илсен, ку ĕç мĕнлине ăнланса илме йывăр мар.

Председатель кабинетĕнче тирпейлĕ, таса. Кашни япала кунта хăйĕн вырăнĕнче. Капăрри, хакли нимĕн те çук. Председатель халăх укçине кирлĕ-кирлĕ мар çĕре те салатма юратмасть, кашни пус шутра пултăр, тесе тăрăшать.

Кирек кампа калаçсан та, председателе ырласа калаçнине илтетĕн. Василий Степанович Капиров кăçал сакăр вун пĕр çул тултарать. Ĕçрен юлмасть-ха старик. Пĕлтĕр

вăл 53 пăт тырă, 436 тенкĕ укça ĕçлесе илнĕ, кăçал та акă ку таранччен 200 ĕçкунĕ тунă. Василий Степанович 1949 çултан пуçласа хăйăрлă вырăнсем çине 154 гектар йывăç лартнă. Çав шутра çирĕм гектарне кăçал лартнă. Колхозăн хăйĕн хыр вăрманĕ çитĕнет. Чĕрĕ произведени вăл, чаплă произведени. Вунă çул, çирĕм çул иртĕ, çĕнĕ вăрман лартаракана ял йышсем ялан ырăпа асăнĕç: Ваçлей мучи вăрманĕ, тейĕç.

— Халĕ ырламасăр калаçма чĕлхе те çаврăнас çук,— хавасланса калаçать Василий Степанович.— Укçа илме те радиопа чĕнеççĕ. Мана тата, ватă тесе, черетсĕр параççĕ. Укça илетĕп те тепĕр чухне тӳрех лавкканалла тухса утатăп. Унта çур литр чикнĕ те — карчăк патне.

— Сыпкалатăн-им пăртак, мучи?

— Сыпасси-качки... уйăхра пĕрре ма тутанса пăхас мар? Карчăкпа иксĕмĕр çур литрне ним мар ӳпĕнтеретпĕр. Хутран-ситрен кансĕрлемест пулĕ вăл, анчах ĕçкĕпе ашкăнма юрамасть. Ĕлĕк ав хресчен çулталăкра пĕрре ĕçнĕ, кĕркунне автан яшки тунă та, ăна та пулин сăрапа çеç иртернĕ. Халĕ хăшĕ-пĕрисем ĕçме темĕн тĕрлĕ сăлтав та тупаççĕ. Автанне пуссан та — виçĕ кун урăлма пĕлмесĕр ĕçеççĕ. Пирĕн ун пеккисемех çук, кӳршĕсенче пулкалать. Юрамасть апла.

Никам та ăна сакăр вуннăран иртнĕ тесе калаймĕ. Куçĕсем чĕррĕн пăхаççĕ, сухалне çеç кĕмĕл тĕсĕ çапнă. Старик кăçалхи май уйăхĕччен лесникра ĕçленĕ, колхоз вăрманне хуралланă. Çав хушăрах масар çинçе сакăр пине яхăн хыр лартарнă. Хăрни пĕр йывăç та çук.

Вăрçă хыççăнхи пурнăçа аса илсе, Василий Степанович пĕр кулăшла ĕç çинчен каласа пачĕ. Авланман тесе, финагент налог шырама пынă-мĕн ун патне.

— Вăтăр пиллĕке çитнĕ, çапах авланман. Налог тӳлес пулать сан,— тет финагент.

— Мана, старике, тепре авлантарма шутламастăр пулĕ те? Карчăк ман вун çичĕ ача туса панă вĕт-ха. Пĕр ывăл вăрçăра вилнĕ, тăватă хĕре качча панă,— тетĕп çакна.

— Мĕнле апла? Хут çинче эсир авланман пек курăнатăр, çулсемпе çамрăк,— пĕрре ман кăвак сухал çине, тепре аллинчи хут çине пăхать финагент.

— Ял Совечĕ мана çамрăклатса хунă иккен. Авланман тесе, чиперех налог шыраççĕ.

Василий Степанович, ватă пулин те, хаçат вулать, радио итлет, çĕршывра мĕн пулса пынине пĕлме тăрăшать.

Вăхăт иртнĕçем нумайăшĕ манăçа юлать. Халĕ колхозник хăйне кирлинчен ытлашши продукцие мĕнле тытас тенĕ çапла тыткалать ĕнтĕ. Нумайăшĕ çав продукцие государствăна сутма тăрăшать, мĕншĕн тесен сутăн илмелли хаксем аван. Анчах сут тесе, никам та хĕтĕртмест. Сутасси-илесси — ирĕклĕ ĕç. Нумай пулмасть-ха, государствăна тĕрлĕ продукци налог йĕркипе памалла пулнă. Пур-и сан, çук-и — кирек ăçтан тупса пар. 1958 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çак йĕркене пăрахăç турĕç. Халĕ ĕнтĕ апат-çимĕç фондне тăвас ĕçре тĕп вырăн колхозсемпе совхозсем йышăнса тăраççĕ.

— Шухăшлатăн та, мĕн пулнине ĕненме те йывăр. Пĕр сурăхран виçĕ-тăватă тир сӳнĕ: налог, çăм, брынзă тата çур тир. Çиме мар, парăмсене татма выльăх-чĕрлĕх усранă. Халĕ çиме усратпăр, ытлашшине хамăрах государствăна леçсе паратпăр. Эпĕ те çĕр хĕрĕх килограм таякан сысна кайса патăм. 170 тенкĕ ытла укçа тӳлерĕç уншăн,— иртнипе хальхине танлаштарса калать Николай Матвеевич Яранцев.— Çĕршыва çимĕç фончĕ тума вăй çитнĕ таран пулăшмалла. Вăл пирĕн таса тивĕç.

Хресчене колхоз стройĕ мĕн панине Петр Андреевич Щукин килйышĕн пурнăçĕ те лайăх кăтартса парать. Çамрăк мар ĕнтĕ вăл, çитмĕл икĕ çулта. Малтанхи трактористсенчен пĕри, 1931 çулта «фордсон-путиловец» çине ларнăскер. Тăхăр ача пулнă унăн: ултă ывăл, виçĕ хĕр. Пĕри вăрçăра пуç хунă. Сакăр ачаран улттăшĕ — учитель, иккĕшĕ — инженер. Хальхи вăхăтра çемьере пурĕ вăтăр виçĕ çын.

— Эпĕ ĕлĕк икĕ класлă шкултан вĕренсе тухнă. Пирĕн ялта ултă çул вĕреннисем пурĕ те эпир иккĕн çеç пулнă,— тет Петр Андреевич, пĕчĕкрех тăваткал сухалне якатса.— Ун чухне эпир учитель пуласси çинчен ĕмĕтленме те пултарайман. Халĕ Совет влаçĕ пулăшнипе хамăр ачасене пурне те специальноç патăмăр. Ачасемшĕн пособи кăна кивĕ укçапа 38 пин тенкĕ илтĕмĕр.

Хăйсен пурнăçĕ çинчен те, ыттисен пурнăçĕ пирки те Петр Андреевич нумай шухăшланă, танлаштарса пăхнă. Юлашкинчен парторганизаци секретарĕпе калаçса пăхма шут тытнă. Секретарь унăн шухăшне ырланă. Петр Андреевич ватăла киле, утмăл çула çитсен, партине кĕнĕ. Халĕ вăл — чи активлă коммунистсенчен пĕри. Çулне кура мар нумай вулать. КПСС историйĕпе Программи сĕтел çинчех выртаççĕ.

— Коммунистсен партийĕн XX съезчĕ пурнăçа уçăлтарчĕ, пуçарулăх валли паха çул уçса пачĕ. Партин XXII съезчĕ чуна савăнтаракан Программă йышăнчĕ. Ирĕксĕрех: мĕншĕн пĕр çирĕм çул çамрăк мар-ши, тесе шутлатăн,— тулли кăмăлпа калаçать Петр Андреевич.

Унăн шухăшĕсем çыхăнса пыраççĕ. Пули-пулми сăмах персе яма юратмасть, кашни сăмахне виçсе калать. Китай руководителĕсем пирĕн халăх çинчен сĕмсĕр элек сарни ăна хытă пăшăрхантарнă, имĕш.

— Куççем çивĕчех мар пулин те, вĕсен çырăвне те, хамăр ЦК çырăвне те вуласа тухрăм. Китайсем пире сурчăк сирпĕтсе вăрçнă пек туйăнать. Мана та, сана та вăрçаççĕ вĕсем. Политграмотăна вĕрентеççĕ. Вĕсем вĕрентнине эпир тахçанах пурăнса иртернĕ ĕнтĕ. Вĕрентни çăва патне-ха, марксизм-ленинизмран пăрăнса кайнă тесе айăплаççĕ тата. Хура элек вăл. Кирек мĕнле пулсан та, икĕ парти хушшинчи хирĕçӳсем пĕтессине шанас килет. Чĕрре кĕме вĕсен нимĕнле сăлтав та çук. Пирĕн пурин те пĕр тĕллев — коммунизм тумалла. Пурин те пĕр тăшман — империализм. Тăванпа тăван хирĕçни тăшмана пулăшни çеç. Çакна Китайри юлташсем тăнласа илĕç, тетĕп.

Колхозра кирек кампа калаççан та, КПСС Центральнăй Комитечĕн уçă çырăвне ырланине илтетĕн. Пухури пек хут тăрăх мар, кашни чунне уçса калаçать, хăй мĕн шухăшлани çинчен ним пытармасăр калать. Кашниех тăван партипе пĕр шухăшлă. Çакна май акă мĕн палăртса хăвармалла: колхозри парти организацийĕ çынсене коммунизмла воспитани парас тĕлĕшпе нумай ĕçлет. Колхозниксем коммунизмла ĕçлекен коллектив ятне илессишĕн кĕрешеççĕ.

Ĕне ферминче ĕçлекен коллектива çак хисеплĕ ята районта чи малтан панă. Фермă хĕрĕсем ăна хăйсен ĕçĕпе кĕрешсе илнĕ. Кунта фермă заведующийĕ пулса Василий Федотович Федотов сакăр çул улшăнмасăр ĕçлет. Коммунист вăл, запасри капитан, Отечественнăй вăрçăра батарейă командирĕ пулнăскер.

— Çирĕп те туслă коллектив тăвас пулать. Унашкал коллективпа нимĕн те хăрушă мар,— тет Василий Федотович.

Хăй коммунист тивĕçне мала хума, çарти пек дисциплинăллă пулма хăнăхнă, ыттисене те дисциплинăна пăхăнма, халăх ĕçне юратма вĕрентет. Панă сăмаха çирĕп тытасси уншăн пурнăç тивĕçĕ пулса тăнă.

Июль уйăхĕнче, çапла, ĕнесем пĕр кунне хĕрĕх килограм сĕт чакарнă. Виçĕ пин ытла килограм çинче хĕрĕх килограм мĕнех вăл, тейĕ тепри. Василий Федотович вара çав хĕрĕх килограмшăн пĕтĕм канăçне çухатнă. Вăл çине тăнипе ĕнтĕ фермă сĕт сăвас тĕлĕшпе виçĕ-тăватă кун хушшинчех малтанхи шая çитнĕ. Ав епле вăл — чакарма пĕр кун, хуса çитме эрне кирлĕ.

Иртнĕ вунă çул хушшинче пулса иртнĕ пысăк улшăну ĕне ферминчи ĕçсенчен те уççăн палăрать. 1953 çулта 100 гектар çĕр пуçне 51 центнер сĕт тухнă пулсан, 1962 çулта 246 центнер сĕт илнĕ, кăçал ак 300 центнертан та иртет. Госу-



# ИРХИ ИЛЕМ

*(Писатель блокнотĕнчен)*

ТИН КĂНА çумăр шăпăртатса çуса иртрĕ те, таткаланчăк пĕлĕтсем хыçĕнчен хĕвел пӳски чăмса тухрĕ, умри çула çутатса, шыв кӳлленчĕкĕсем çинче йăлтăртатса сиккелерĕ. Автобусри пассажирсем, шарлаттарса çумăр çунипе кăштах салхулланнăскерсем, пĕр-пĕринпе хаваслăн калаçма тытăнчĕç. Калаçу ытларах ял пурнăçĕ пирки пычĕ: çула тухнисенчен çурри ытла колхозниксем пулчĕç иккен.

— Шоферĕ те ĕшенчĕ ĕнтĕ, çулĕ йывăр,— ассăн сывларĕ пĕр кинеми.— Кун пек çулпа...

— Ĕшенни-мĕнĕ юрĕ-ха вăл, çумăрĕ çуни паха,— терĕ манпа юнашар ларакан мучи, кĕске сухалне якатанçи пулса. Тумланасса вăл самаях типтерлĕ тумланнă, çиелтен плащ тăхăннă. Вăл Шупашкарта пурăнакан ывăлĕ патĕнчен таврăнать иккен. Хăй калининсем.— Ку çумăр вăл, атьсемĕрсем, çĕр сĕткенĕ, тырпула панă сиплĕ шерпет пекки,— çутçанталăк ырлăхĕпе киленнĕ пек сăмахларĕ мучи.— Ыраш акнă вăхăтра ăшă çумăр...

— Калаçатăн кирлĕ мара,— терĕ тепри, ун пекех çулланнăскер. Вăл самантсерен ури хушшинчи пысăк кутамкки çине пăхкаласа пычĕ, ахăртнех такам йăтса тарасран шикленет тейĕн.— Эсĕ, хăта, ытлашши пуплетĕн. Ыраш акма кая юлман-ха, малтан кĕр тыррисене вырса пухас пулать. Куратăн, ыраш хирĕсем епле сарăлса выртаççĕ?

Эпĕ ирĕксĕрех кантăкран пăхса илтĕм. Автобус Шупашкар районĕнчи колхоз уйĕсем хушшипе пырать. Кунта (хăш колхозăнне пĕлеймерĕм) вырма тин кăна пуçăннă анасем таçта çитиех тăсăлаççĕ. Çумăр хыççăн хирте никам та çук. Леререх çĕмел çине çĕмел ларать, паллах, çурлапа вырса пухнă ĕнтĕ. Мĕншĕн çурлапа-ши? Хирĕ тӳрем, анлă, комбайнпа вырма лăпах чух темелле.

— Ыраш акасси вырса пухассиех мар-ха,— терĕ тепĕр хут кутамккалли.

— Э-э, хăта, çак вăхăтра сывăрса выртма юрамасть. Ирхи куракăн сăмси шурă пулнă тенĕ пек, ĕç çинче шуçăмпах куç уçма тивет, пăлахая пенипе тыр-пул пӳлмене кĕмест. Ялял ĕçне халăхпа-мирпе вăхăтра тумасан, ана çинче каю шăтать, теççĕ. Кĕçех акă вырман ыраш тăкăнма тытăнать.

— Хам та çавна каламастăп-и?— килĕшнĕ пек пулчĕ лешĕ.— Вырмалла çав...

ҫӗнче тем тӗрлӗ улшӑну та пулнӑ. Халӗ ӗнтӗ Устава ҫӗнӗрен пӑхса тухма вӑхӑт.

— Ҫынсем ӗҫе тухманни ҫинчен сӑмах ҫук пирӗн,— тет Николай Петрович.— Ӗҫе тирпейлӗ тума вӗрентес тӗлӗшпе нумай ӗҫлемелле-ха. Утӑ ҫулать — ҫава хушши хӑварать. Тырӑ вырать — пучах тӑкса хӑварать. Кантӑр хутать — ҫиелти ҫурӑмӗсем курӑнса выртаҫҫӗ. Килӗнчи ӗҫсене никам та ҫавӑн пек тумасть вӗт. Пур пирӗн, килти пек тӑрӑшса ӗҫлекенсем те сахал мар. Кашнинех чунпа ӗҫлеме вӗрентес пулать.

Ку чухнехи пысӑк ыйтӑва хускатать Николай Петрович. Хӑшпӗрисем колхоз ырлӑхӗ ҫинчен нисҫта пӑхмасӑр калама вӗреннӗ, анчах хӑйсен тивӗҫӗсем ҫинчен час-часах манса каяҫҫӗ. Ҫынсене куллен ӗҫе вӗрентсе пыни, вӗсемпе яланах пӗрле пулни, вӗсемшӗн чунтан тӑрӑшни кирек мӗнле йывӑрлӑха та ҫӗнтерме, кирек мӗнле плана та тултарма пулӑшать. Ӗҫре кунтан шанчӑклӑ ҫул-йӗр ҫук. Ҫак ҫул-йӗрпе утать Николай Петрович, ҫакӑнта унӑн вӑй-хӑвачӗ, унӑн авторитечӗ, ҫакӑнта колхоз ӗҫӗн пӗтӗм ӑнӑҫлӑхӗ.

КПСС Центральнӑй Комитечӗн июньти Пленумӗ, вунӑ ҫулхи итогсене туса, ҫакна палӑртрӗ: «иртнӗ вунӑ ҫул пирӗн совет халӑхӗ промышленноҫпа ял хуҫалӑхне аталантарас ӗҫре чаплӑ ҫитӗнӳсем тунипе, экономикӑн мӗн пур отраҫлӗсене ертсе пырас ӗҫе тӗпрен революциллӗ улӑштарса ҫӗнетнипе, коммунизм строительствин тӗп ыйтӑвӗсене творчествӑллӑ тӗпчесе пӗлнипе, парти ӗҫ ҫыннисене коммунизмла воспитани парас енӗпе нумай-нумай ӗҫленипе палӑрса тӑрать».

«Самолет» колхозӑн ӗҫӗ-хӗлӗ те ҫакна лайӑх ҫирӗплетсе парать. Кунпа пӗрлех ку колхоз опычӗ акӑ мӗн ҫинчен калать: колхоз стройӗ ҫӗнтерни ял хуҫалӑхӗн малалла пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе аталанма иксӗлми паха майсем пур. Май пуррине пурнӑҫа кӗртесси пӗтӗмпех ҫынсенчен килет.

П. ИВАНОВ



# ЯЛТИ СТРОИТЕЛЬСТВӐ

ЯЛ ВАРРИНЧЕ ҫӗнӗ ҫурт, пысӑк вӑл, икӗ хутлӑ, чӳречисем йышлӑ; шала кӗрсен калла тухас килмест; кунта аслӑ пӳлӗмсем те, пӗчӗккисем те туллиех. Алӑк умне «Клуб» тесе ҫырса ҫапнӑ. Клуб умӗнче кӳлӗ, унта вара...

Пурин пирки каласа та пӗтерейменӗн, пурне курса тухма та ҫук, тейӗн. Ку вӑл «Правда» колхозне кӗрекен Ҫӗньял клубӗ. Ӑна утмӑл иккӗмӗш ҫулта туса лартнӑ. Залра ик ҫӗр аллӑ ҫын вырнаҫма пултарать. Халь эпир клуб ҫинчен мар, ӑна тунӑ хӑш-пӗр ҫынсем пирки пӗр-икӗ сӑмах каласа хӑваратпӑр.

Вӑрнар производствӑ управленине кӗрекен Калининӑри «Правда» колхозра, тӗпрен илсен, строительствӑ ӗҫӗсем аллӑ виҫҫӗмӗш ҫулта пуҫланнӑ. Колхозниксем малтанах ӗне тата сысна витисем йывӑҫран туса лартнӑ, анчах вӗсенче ҫителӗклӗ чухлӗ выльӑх-чӗрлӗх усрама май килмен, ҫитменнине тата йывӑҫран тума ытла хаклаларнӑ.

Юлашки ҫулсенче колхозри обществӑлла ҫуртсене кирпӗчрен купалама пуҫларӗҫ. Строительствӑн иккӗмӗш черечӗ аллӑ пиллӗкӗмӗш ҫулта йӗркеленсе кайрӗ. Ял ӗҫченӗсем хӑйсен вӑйӗпех тыр-пул склачӗсем, электростанци хута ячӗҫ, кайрантарах вара самӑртмалли сыснасем валли иккӗмӗш вите туса пӗтерчӗҫ, автомашинӑсем усрамалли гараж та ӳссе ларчӗ. Юлашки вунӑ ҫул хушшинче стандартлӑ витесем, сакӑр ҫӗр тоннӑ вырнаҫакан тыр-пул склачӗ, пӑру вити тата ытти обществӑлла ҫуртсем сахал мар купаланчӗҫ, ял илемне кӳчӗҫ.

Колхозри строительсен бригадине Серафим Константинович Константинов ертсе пырать. Артельти ӗҫченсем хушшинче строительствӑ ҫыннисем ҫуралса ӳсрӗҫ. Вӗсем каменщик, штукатур, платник, столяр ӗҫӗсене вӗренсе ҫитрӗҫ. Халӗ бригадӑ валли каменщиксем е штукатурсем шыраса ют яла каймаҫҫӗ.

Строительсем пирки сӑмах хускатсан, уйрӑммӑнах вӑтам шкулти Петр Андреевич Ефимов учителе ырӑпа асӑнас килет. Вӑл строительствӑ бригадинче хӑйсен ҫынни, вӗсен ҫывӑх тусӗ. Кунта вӑл хӑналӑха мар, ӗҫлеме килет. Петр Андреевич ҫу кунӗсенче, каникул вӑхӑтӗнче, стройкӑра хӑй тӑрӑшать. Кирпӗч хума та пӗлет вӑл, платник ӗҫӗнчен те хӑрамасть, маляр ӗҫне те пултарать. Хӑйӗн пӗлӳлӗхне Ефимов шкул ачисене парать, вӗсене вӑл строитель ӗҫне юратма пӗчӗкрен хӑнӑхтарса пырать. Петр Андреевич ӗҫленӗ хушӑра хӑйӗн тӗп ӗҫне те манмасть — вӑл, хӗрӳллӗ агитатор пулнӑ май, тӑтӑшах калаҫусемирттерет, тӗнчери лару-тӑру ҫинчен, Коммунистсен партийӗпе Совет Правительствин политики ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарать.

Халӗ колхозра ҫӗнӗ сысна витипе ӗне вити туса пӗтереҫҫӗ. Ӗне витинче «елочка» вырнаҫтарса лартрӗҫ. Ҫавӑн пекех пахча-ҫимӗҫ усрамалли ҫурт, Калининӑри ик ҫӗр аллӑ ҫын вырнаҫмалли культурӑ ҫурчӗ туса пӗтерме палӑртнӑ.

Г. ИВАНОВ.

Ӳкерчӗксенче: Ҫӗньялти «Правда» колхоз клубӗ; Петр Андреевич Ефимов строительсене ҫӗнӗ хаҫатсем вуласа кӑтартать.

А. ПРИПАЛОВ ӳкерчӗкӗсем.



ла партин Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ пуҫарнӑ ӗҫсем пурнӑҫа кӗрсе пынине куратӑн та чун савӑнать. Сентябрьти Пленумра палӑртнӑ ӗҫсем ҫеҫ мар, парти ял хуҫалӑхне аталантарас тӗлӗшпе йышӑннӑ ытти решенисем те чаплӑн пурнӑҫа кӗрсе пыраҫҫӗ. Халӑх парти кӑтартса панӑ ҫулпа шанчӑклӑн утать, партипе халӑх пӗрлӗхӗн вӑйӗ кашни утӑмра сисӗнсе тӑрать.

Автобус Калининӑ патнелле ҫывхарнӑ май эпӗ тепӗр хут «Правда» колхоз ӗҫӗсене аса илтӗм. Ман умма колхоз ферминчи хастар хӗрсем тухса тӑнӑн туйӑнчӗҫ. Чӑнах та, халлӗхе вӗсем Ӗҫ Геройӗсен ятне илеймен-ха, кӑкӑрӗсем ҫинче те ылтӑн медальсем йӑлтӑртатмаҫҫӗ. Вӗсем ахаль колхозницӑсем ҫеҫ темелле. Ҫапах та вӗсем коммунизм обществин никӗсне паян хывакан ӗҫченсем, тӑван колхоза пуян тӑвассишӗн ырми-канми тӑрӑшакансем. Ҫавӑнпах-и, тен, автобусра ларса пыракан мучи те ку чухнехи ҫамрӑксене ҫине-ҫинех мухтаса илет.

...Вӗсем тӑххӑрӑн: сакӑр хӗр, пӗр каччӑ. Тӑххӑрӗш те ӗне сӑваҫҫӗ. Пӗри тепринчен чипер, пӗри тепринчен хастар ҫамрӑксем. Виктор Никифоров та ӗҫре фермӑ хӗрӗсенчен юлмасть. Ӑна ӗне сӑвакан хӗрсем юлашки вӑхӑтра пур тӗлӗшпе те пулӑшса пыраҫҫӗ.

Виктор ӗне ферминче ӗҫлеме шут тытсан, ялти хӑш-пӗр яш-кӗрӗмсем тӗлӗнмеллипех тӗлӗннӗ, тиркесе калаҫакансем те тупӑннӑ. Чӑн та малтанхи вӑхӑтра Виктор хӑй те кӑштах вӑтанкаланӑ, хӑйне именчӗклӗрех тыткаланӑ. Ку тарана ҫитсе арҫын ӗне сунине курман-ха ялта. Виктора ҫынсем хӑйӗнчен кулассӑн туйӑннӑ. Анчах ӗҫре ал-ура ҫыпӑҫать пулсан, кам култӑр-ха? Хӑнӑхрӗ Виктор, ӗнесене те чунтан юратса пӑрахрӗ, ӗҫӗ те чӗре патне пычӗ. Виктор халӗ пӗрремӗш хут пӑруланӑ ӗнесене пӑхать, ҫапах та ыттисенчен юлмасть вӑл. Эпӗ ҫак хӗрӳ чӗреллӗ йӗкӗт ҫинчен выльӑх-чӗрлӗх фермисен заведующийӗнчен, Степан Терентьевич Ластухинран, ыйтса пӗлтӗм, вӑл ун пирки ӑшшӑн калаҫрӗ. «Пурте ун пек тӑрӑшса ӗҫлес пулсан, пирӗн колхозра паянах коммунизм пуҫланмалла», терӗ вӑл.

Кӗтмен ҫӗртен пӗр кулӑш аса килчӗ. Кӑна мана Зоя Андреевна, интернат-шкулти учительницӑ, каласа панӑччӗ.

Зоя Андреевна — Тутар республикинчен, Тетюш таврашӗнче ҫуралса ӳснӗскер. Унччен вӑл Шупашкарти электроаппаратсем тӑвакан заводра ӗҫленӗ, заочнӑ вӗреннӗ, халӗ Калининӑра иккӗмӗш ҫул ӗҫлет. Вӗсен колхозӗнче, Тутар республикинче, пӗри дояр пулма шут тытнӑ имӗш. Юлхав тӑсланкӑ унччен кӗтӳ те кӗткеленӗ, ытти ӗҫсенче те сулланса ҫӳренӗ, анчах пархатарӗ пулман. Ҫапах та вӑл ҫине тӑрса ыйтнипе юлашкинчен председатель ӑна доярта ӗҫлеттерсе пӑхма килӗшнӗ. Кам пӗлет, тен, тупӗ вӑл хӑй вырӑнне, тесе шухӑшланӑ. Халиччен ҫак ҫын ӗне суса мар, ӗне ҫиллине те ҫуса курман. Малтанхи кунсенчех



масть те-ха, çапах та... мăйне çута бляхăллă шнур çыхать, сенкер поштанникпе çÿрет. Вăйĕ те юрату валли нумайрах юлать пирĕнниничен — ĕçлемест, шир пухать...

«Вырăн» та, «ширпа» «вăй» та, Вадим калакан «çылăхсем» те, вăл хăй те Тараса чăтма çук, йĕрĕнтерсе янă. Ытла лăпăр-лапăр япаласем ĕнтĕ! Вăл ура çине тăнă та Вадим патнелле утса пынă. Шăлĕсене хытă çыртса лартнипе, ун янаххипе пит çăмартисем çинче пысăк та хытă мăкăльсем куçкаласа çÿренĕ, пĕрĕннĕ куçхаршисем айĕнчи хĕсĕннĕрех куçĕсенчен хĕлхем сирпĕнсе тăнă пек туйăннă. Вадим шикленсе ÿкнĕ, тăрса, каялла чакма пуçланă.

— Эсĕ... Акă мĕн: хăвăртрах вĕç-ха кунтан,— тенĕ ăна Тарас, каялла хăй вырăнне ларса.

Вадим вара тепĕр пирус кăларса тивертнĕ те, урăх ним сăмах та чĕнмесĕр, айккинелле пăрăнса кайнă. Кăшт утсан, вăл, чарăнса, каялла çаврăнса пăхнă, тем каласшăн пулса, чылайччен пĕр вырăнта тăнă. Анчах Тарас ăна курман, вăл пуçне усса, шухăша кайса ларнă. Чылайччен ларнă. Ĕçлеме тытăнсан та, чĕрине шарах çурнă хыпар ун асĕнчен пĕртте кайман, хăлхисенче Вадимăн савăнарах, кулара́х, мăшкăлларах каланă сăмахĕсем тăнă:

«Пĕтĕм ял пĕлет, калаçать...»

Тен, чăнах та пĕлетех пулĕ. Çавăнпа та, çынсен куçĕ умне курăнма вăтанса, Тарас вăл кунхине мастерскойра каç пуличченех ĕçленĕ. Теме пула ĕнтĕ,— те ун кăмăлĕ пăсăккине сиссе, те хăй ăна питĕ хисепленипе,— унпа пĕрле ĕçлеме Маханов слесарь те юлнă.

Маханов хăй вăл каччă-ха. Ĕнтĕ вата каччă темелле, çартан тăват-пилĕк çул каяллах таврăннă. Питĕ именчĕкскер, хĕрсенчен хăй вăтанать. Çынни вара питĕ лайăх: сăпайлă, ĕçчен, юлташшăн чунне пама хатĕр.

Çул май Тарас ăна буфета ертсе кĕнĕ, пĕрер стакан эрех, сăра илнĕ. Буфетчицă çакăнтан тĕлĕннĕ те: слесарь ĕлĕкрех юлташĕсемпе пĕрле сăра ĕçме кĕркеленĕ пулин те, комбайнер унччен унта курăнсах кайман. Анчах вăл ăна-кăна шарламан, пурне те ăнланнă пек пулса:

— Хăш чух хуйха пусарать вăл, эрех,— тенĕ те куç хĕссе илнĕ; уншăн сутса пултăр.

Тарас чĕрине ун сăмахĕсем çĕçĕ пекех çурса кайнă. Ара, ку та пĕлет иккен, ăна хуйхăпа ĕçме пуçланă, тесе шутлать. Тарас тарăхса, стаканне стойкка çине лартнă, унтан, каялла илсе, буфет айккинчи таза тăкмах тăнă, анчах çавăнтах хăй Маханова ертсе кĕнине аса илнĕ те апла туман, тата икшер бутерброд илсе сĕтел хушшине кайса ларнă.

Эрехне ĕçсе ярсан, ахаль чух шарласах кайман Маханов самаях калаçкалама пуçланă. Ку Тараса килĕшмен пулин те, вăл та паçăр Вадим асăннă япалана тĕкĕнмесĕр иртмен. Анчах Соколов пек «философилле» шухăшсем каламан, тÿррĕнех сăтăрнă.

— Йывăр ĕнтĕ, паллах,— тенĕ вăл.— Тулĕк çапма-хĕнеме ан шутла, пĕтерен вара. Ăна та, хăвна та пĕтерен. Чышкусем ав мĕнле хăрушă санăн, икĕ пăтлă кире пуканĕ пек. Çапсан, этем пуçĕ мар, арман чулĕ саланса каймалла.

Канашшăн Тарас çиленмен, кулса илнĕ те:

— Хальччен никама та çапса курман-ха,— тенĕ.

Сăри начар пулнă, ăна вĕсем çаплипех лартса хăварнă. Бутерброчĕсене çисе янă та урама тухнă.

Тарас килне таврăннă çĕре ĕнтĕ тĕттĕмленсе çитнĕ. Вăл картишне тухса çăваннă та апат çимесĕрех пÿрт умне тухса ларнă...

...Хăйсен çурчĕ патне çывхараспа унта, сак çинче, такам ларнине асăрхасан, Манюк хăраса кайрĕ.

«Авенариус мар-ши?»

Тарас, ăна кĕтнĕ чух, пĕччен лармастчĕ, Куляпа Ваççана илсе тухатчĕ, вĕсемпе вылятчĕ. Ăна курсан вара ывăлĕсем хирĕç чупатчĕç:

— Анне килет!

Вара, кĕрсе, пĕрле ларса, каçхи апат çиетчĕç...

Манюк хулленрех утма тытăнчĕ, пăртакран вара чарăнсах тăчĕ.

— Ну, кил, кил,— чĕнчĕ, çакна асăрхасан, Тарас: пÿрт умĕнче вăл ларнă иккен.

— Мĕн эс... пĕччен-ех?— персе ячĕ ним каламе аптранă Манюк.

— Пĕччен-ех-ха. Ытлашши куç-хăлхасăр калаçмалли пур.

Темле аван мар япалана сиснĕ пек, Манюкăн чĕри кăрт!— сиксе илчĕ. Вара малалла та çаплах хăвăрт-хăвăрт тапма пуçларĕ.

— Мĕнле çекрет-ши?— Манюк кулам пекки турĕ, упăшки çумне пырса ларчĕ.— Ачасем çывăраççĕ-и?

— Çывăрма выртнă...

Тарас, аттисен хури кайнă пуçĕсем çине пăхса, кăшт шухăшласа ларчĕ. Вăл арăмĕнчен тем ыйтма хатĕрленет те, тăруках хăяймасть пулмалла. Ыйту вара Манюкшăн пĕрре те ырă пуласшăн туйăнмасть.

— Паян иртерех килтĕн эсĕ...

— Тĕрлĕ пулать.

— Ĕçÿсем мĕнле пыраççĕ? Ĕнÿсем сĕт чакармаççĕ-и?

— Çук-ха, чиперех.

Унтан каллех шăпланчĕç. Тарас çÿçне сăтăркаласа якатрĕ те Манюк енне çаврăнчĕ.

— Мĕнле, мĕн-и... Авенариуспа чăн-чăнласах... Тĕрĕс-и ку?— ыйтрĕ вăл, тÿрленсе ларса.

Манюкăн пĕтĕм ÿт-пĕвĕ вĕриленсе кайрĕ. Çак самант хăçан та пулин пулмаллаччĕ ĕнтĕ, хăрасах пулин те, ăна кĕтетчĕ Манюк. Анчах вăл çаплах хăрушă пуласса шухăшламанччĕ. Çитменнине тата Тарасран эрех шăрши пени те ун чĕрине çурсах ячĕ: çапас пулсан,— ÿсĕрле мĕн пулмасть?— вĕлерсех пăрахать вĕт!

— Кам каларĕ?— ыйтрĕ вăл; сасси сасартăк шала кайрĕ.

— Ăна асăнмăпăр. Эс çакна кала: тĕрĕс-и вăл?— кÿ! печĕ каллех Тарасран эрех шăрши.

— Эсĕ ÿсĕр-ха, урăлсан калаçăпăр,— терĕ Манюк: ура çине тăчĕ, кăшт айккинерех пăрăнчĕ.

— Çук, кĕçĕрех калаçар, эпĕ ÿсĕр мар.

Тарас кармашрĕ те, ăна аллинчен тытса, хăй çумне лартрĕ. Хăйне ирĕксĕрлени Манюка тарăхтарса ячĕ, вăл каллех сиксе тăчĕ те халĕ ĕнтĕ хыттăнах:

— Çук, ÿсĕр эсĕ, урăлсан калаçăпăр,— тесе кăшкăрса пăрахрĕ; хăюллăхĕ ăçтан тухрĕ-тĕр.— Çывăрах выртса, эпĕ аннесем патне каятăп.

— Ниçта та каймастăн. Çаврăн каялла!— терĕ Тарас та хыттăн.

Манюк итлемерĕ, паçăр килнĕ çулпа тăвалла, амăшĕсем патнелле утрĕ. Кăшт кайсан, чарăнса тăмасăрах, каялла çаврăнса пăхрĕ.

Тарас çаплах, хăй вырăнĕнчех ларатчĕ, тăкăрлăкра, çатан кĕтессинче, темле мĕлке мĕкĕлтететчĕ...

Вăл мĕлке, анкартисем хыçĕпе çаврăнса, тепĕр тăкăрлăкпа тухса, Манюк амăшĕсен калинкки умне пычĕ,— Манюк шăпах унта, шухăша кайса, çенĕх алăкне шаккама хăяймасăр тăратчĕ.

Авенариус картишне кĕчĕ те вĕсем калинкке айккинчи кунта темле майпа килсе выртнă катăк арман чулĕ çине ларчĕç. Çак каç вара вĕсен иккĕшин — иккĕшин кăна та мар, пилĕк çыннăн — пурнăç çулне пĕтĕмпех урăх еннелле пăрса ячĕ. Çакна çывхартма Тарас хăй те пулăшрĕ пулмалла...

Калаçас пеккине калаçса пĕтерсен, Авенариус Манюка чуп турĕ те урама тухрĕ, аллине сĕлтсе илсе, анаталла утма пуçларĕ.

Те умра йăмрасем ларнине пула, малтан Манюк та, Авенариус та асăрхайман: урампа тăвалла Тарас хăпарнă иккен. Тĕл пулсан, арçынсем иккĕш те тăпах чарăнчĕç. Унтан Тарас:

— Ăхă, ав мĕнле иккен,— терĕ; Авенариус патне çывхарчĕ, ăна икĕ хулĕнчен тытса, хытă кăна силлерĕ те çул айккинелле вăркăнтарса ячĕ.

— Акă сана манăн пĕр мăшкăлшăн, Бауэр,— терĕ вăл питĕ тарăхнă сасăпа; те юри, виртлесе çапла чĕнчĕ вăл, те философсен хушамачĕсене пăтраштарчĕ.

Авенариус, ура çинче тытăнса тăраймасăр, чикеленсе кайрĕ, чутах йăмра вулли çумне пырса çапăнмарĕ. Унтан вăл, теме пула питĕ хытă ĕхлетсе илсе, ура çине сиксе тăчĕ те, ним шарламасăр-тумасăр, тăвалла чупрĕ. Тарас унăн ÿксе юлнă картусне кайса илчĕ, ăна аллинче чылайччен çавăркаласа тăнă хыççăн, йăмра тăррине ывăтрĕ. Картус каялла ÿкмерĕ.

Манюк, сас-чÿ кăлармасăр, калинккене питĕрсе хучĕ. Анчах Тарас ун патне ахаль те çывхармарĕ, йăмра айĕнче тем шухăшласа тăчĕ-тăчĕ те килелле утрĕ...

Тепĕр кунхине Манюк Тарас ĕçе кайсан тин таврăнчĕ. Пăянамăшĕ пахчара çĕр улми çумлатчĕ. Ку уншăн лайăх пулчĕ: вăл хăй япалисене пуçтарса икĕ пысăк чăматана тултарчĕ, темиçе çыхă турĕ те, машинă сасси илтсе, урама чупса тухрĕ.

Макаров Иван килет иккен. Пушăллах. Манюк ăна алă тăратса чарчĕ те хăй япалисене амăшĕсем патне леçсе хăварма ыйтрĕ.

Макаров малтан ун çине тĕлĕнсе пăхса ларчĕ. Унтан пурне те ăнланса илнĕ пек пулчĕ те кабинă алăкне шалтлаттарса хупса хучĕ.

— Пуçăнта каччă та улах вырăн çеç санăн,— терĕ вăл.— Тараса мăшкăллас килмест, урăххисенчен ыйт.— Моторне хускатса ячĕ те малалла вĕçтерчĕ.

Манюк вара япалисене çуранах тултрĕ. Пăянамăшĕ ăна кĕтме ыйтса пăхрĕ, анчах Манюк килĕшмерĕ, «пьяницăпа та хулиганпа урăх пĕр минут та пурăнмастăп»,— тесе, юлашки çыххипе пĕрле Куляпа Ваççана та ертсе кайрĕ. Тарас амăшĕ, тĕлĕннипе, диван çинче ним хускалмасăр ларса юлчĕ...

Тарас хăй хыççăн çав каçхинех пырĕ, тенĕччĕ Манюк. Пырасси-тăвасси пулмарĕ, ун патне Куляпа Ваçça хăйсем кайнă. Выртма вара таврăнмарĕç те, унтах çĕр каçрĕç.

Тараса Манюк тата тăвата кунран курчĕ: вăл фермăна каятчĕ, лешĕ буфетран тухрĕ.

Манюк унран пăрăнма тăчĕ, анчах Тарас ăна кăшкăрса чарчĕ те ун патне пычĕ.

— Эсĕ мĕн хăтланатăн çав, Манюк?— ыйтрĕ вăл.

— Ним те хăтланмастăп. Мĕншĕн?

— Мĕнле «мĕншĕн?» Çапах та...

— Урăх пĕрле пурăнмастпăр.

Нумай пулмасть кăна-ха Манюк çак сăмахсене калассинчен хăратчĕ. Анчах халĕ вăл вĕсене ансатах персе ячĕ. Персе ячĕ те хăйне калама çук çăмăллăн, ирĕклĕн туйма пуçларĕ, ăна пурăнма, ĕçлеме çав тери кансĕрлекен темле курăнман танатаран вĕçерĕнсе тухнă пекех туйăнчĕ.

— Куляпа Ваçça мĕнле вара?

— Манпа пулаççĕ, алимент тÿлетĕн.

— Вĕсене алимент мар, ашшĕ кирлĕ...

Тарасран эрех тата сухан шăрши перет. Елĕк вăл сĕнсен те ĕçместчĕ. Май уявĕнчен юлнă эрех те çаплипех ларатчĕ-ха. Халĕ вара... Неушлĕ хуйхăпа ĕçме пуçларĕ-ши? Ĕçтĕрех эппин, капла унран писме çăмăлтарах та. Уйрăлма та сăлтав пур тата: ĕçет.

— Куляпа Ваççана памастăп сана.

— Ун пек праву çук: эпĕ амăшĕ.

— Амăшĕ мар эсĕ. Эсĕ... Эсĕ...

Тарас темле усал сăмах каласшăнччĕ пулмалла та, анчах, ятлаçма пĕлменскер, ăна тупаймарĕ ахăр. Манюк вара ăна итлесе тăрасшăн та пулмарĕ, аллине сулчĕ те пăрăнса утрĕ. Юриех, çаврăнса та пăхмарĕ...

Çакăн хыççăн вăл Тарас патне тата виçĕ кунран ашшĕпе пĕрле пычĕ.

Тарас килтеччĕ. Урахчĕ, вĕсенчен малтан чупса пынă ывăлĕсемпе нумай ÿкерчĕклĕ темле кĕнеке куратчĕ.

Çĕпĕрте темле вăрманпромхозра ĕçлесе пурăнакан Сынкка Пруххи вăл вăхăтра ялти çуртне сутма килнĕччĕ. Çак хыпар хăлхине кĕрсен, Манюк ун çуртне илсе юлма шут тытрĕ. Пÿрчĕ çĕрĕкрех, ытти хуралтисем те чаплах мар — Прухха уншăн хаклах ыйтмарĕ. Манюк укçа ашшĕнчен, кÿршĕ яла качча кайнă Хвекла аппăшĕнчен илчĕ, анчах кирлĕ чухлĕ пухаймарĕ. Вара вăл Тарас патĕнчен, уйрăлнă май, сурăхсемпе сыснана илсе тухма шутларĕ.

— Мана урăх нимĕн те кирлĕ мар санран,— терĕ вăл.

— Илсе каях эппин,— килĕшрĕ Тарас, аран илтĕнмелле сасăпа, амăшне куçран: ан шарла ĕнтĕ, тенĕ пек пăхса илчĕ.— Пĕтĕм пурнăç арканчĕ те, сыснапа сурăхсем çинчен шухăшламалла-и халь?..

Манюк пурăнма вăта кас вĕçне, хăй çуртне куçрĕ. Каçхине унта Авенариус пыратчĕ. Вăл пырсан, Куляпа Ваçça ашшĕпе асламăшĕ патне тухса чупатчĕç...

Манюк малтан çакна асăрхамăш пулатчĕ, ку ăна пăшăрхантармастчĕ: темех мар вĕт, ачасене пĕрре вĕреннĕ, хăнăхнă кил туртать. Анчах ку вăл тĕрĕс шухăш пулмарĕ: Куляпа Ваçça унран хăйĕнчен тарма пуçланă иккен. Вăл вĕсене хĕнесе те пăхрĕ, ку та пулăшмарĕ. Вара Манюк хăйне упăшкинчен уйăрма,





# СОЦИАЛИЗМЛА РЕСПУБЛИКĂСЕНЧИ ТУССЕМ ПАТĔНЧЕ

Совет Союзĕпе Демократиллĕ Германи республики хушшинчи туслă çыхăнусем кулленех çирĕпленсе пыраççĕ. Совет специалисчĕсем нимĕç халăхне нумай çĕнĕ ĕçсене алла илме пулăшаççĕ. Липецк хулинчен килнĕ Александра Поспелова доцент Демократиллĕ Германи республикинче вырăс чĕлхипе вĕрентекен преподавательсен квалификацине ÿстерекен курсра ĕçлет. Педагогсемпе студентсем пĕр-пĕрин ĕç опычĕпе тĕплĕн паллашаççĕ (çÿлти ÿкерчĕк).

Социализмла Демократиллĕ Германи республикинче çĕнĕ промышленноç предприятийĕсем ÿссех пыраççĕ. Эйхсфельд хулинче çип арлакан фабрика тăваççĕ. Кăçал çак фабрикăра аллă пилĕк пин йĕке, çитес çул çĕр пин йĕке ĕçлемелле. Халь кунта фабрикăра ĕçлеме çĕнĕ кадрсем хатĕрлеççĕ. Çĕр сакăр вун хĕр фабрикăри станоксемпе ĕçлеме вĕренсе çитрĕ ĕнтĕ, продукцисем пама пуçларĕç. Ханнелоре Клейн тата Урсула Вегрих çип арлакансем ĕç планне ирттерсе тултараççĕ (варринчи ÿкерчĕк).

Социализмла Чехословаки республикинче хими промышленноçĕ пысăк утăмсемпе аталанса пырать. Виççĕмĕш пилĕк çуллăхра (1961—1965) республикăра хими завочĕсем çĕр вăтăр ытла туса лартаççĕ. Валашск-Мезержичи хими заводĕнчи Мирослав Бартин çамрăксен чи çывăх тусĕ. Халĕ вăл Олдрих Кулк тата Антонин Хнилик токарьсене ĕçе вĕрентет (аялти, сылтăмри ÿкерчĕк). Çак предприяти кăçалхи çул вĕçĕнче хута каймалла.

Венгрири комсомолецсем кашни çуллах строительствă лагерĕсенче хăйсен ирĕкĕпе ĕçлеççĕ. Вĕсем, лагерьте икшер эрне пулса, строительсене шурлăх типĕтме, çĕнĕ çуртсем тума пулăшаççĕ. Кунта вĕсем ĕçе юратма, коллективра пурăнма, пĕр-пĕрне пулăшма вĕренсе пыраççĕ. Çак пуçарăва пула çĕршыв сахал мар тупăш илет.



*Пирĕн парти çапла шутлать: хальхи условисенче социализмла çĕршывсем пĕр-пĕринпе пур енчен те килĕштерсе ĕçлесси, вĕсем хушшинчи социализмлă ĕç пайланăвĕ коммунизм патне пыракан çĕршывсемпе халăхсен экономикă, политикă тата культурă аталанăвĕн чи кирлĕ ыйтăвĕсенчен тухса тăрать.*

*Н. С. ХРУЩЕВ.*

Дьĕр хулинчи вăтам шкулта вĕренекенсем Шандор Сиклай ячĕпе хисепленекен Ханшаг лагерĕнче тăрăшса ĕçлеççĕ, вĕсем шурлăхлă вырăнсене типĕтеççĕ. (Çÿлти, сылтăмри ÿкерчĕк).

АДН, ЧТК, МТИ тата ТАСС фотохроники



---

ăна алимент тÿлеттерме ыйтса, суда заявлени çырса пачĕ...

...Вĕсен ĕçне халăх клубра тăват-пилĕк сехет хушши тĕпчерĕ, тишкерчĕ. Унтан пĕрре те кĕтмен япала сиксе тухрĕ: халăх Манюкран Ваççапа Куляна туртса илме, вĕсене Тараса пама йышăнчĕ...

Çакăнпа кайран халăх сучĕ те килĕшрĕ...

Сÿнтĕк чÿречисем ĕнтĕ паçăрах сÿннĕ. Юхтанов та ĕне кĕтÿне Киссук ращине хăваласа кĕчĕ. Дояркăсем часах килĕсене таврăнĕç, ачисене, упăшкисене апата чĕнĕç...

Çил халĕ касă-касăпа мар, тăтăш вĕре пуçларĕ. Акă вăл Авенариус лартнă палан тĕмĕн юлашки çулçине татса илчĕ, ăна ялалла вĕçтерсе кайрĕ.

Халĕ унăн ним те юлмарĕ ĕнтĕ кунта. Тен, пулмĕ те: кайнăранпа çыру та яман вĕт. Çитменнине тата юлашки вăхăтра, хăйсен çуртне куçсан, малтанхи пек ачашшăн калаçмастчĕ те. Юлашки каç вара килсе те пăхмарĕ, ирхине çул май çеç кĕрсе тухрĕ...

Тĕнчене каçхи ĕнтрĕк çапрĕ, сулхăнлатрĕ. Çеплере ĕçлекен трактор та кĕрлеме чарăнчĕ. Тарас, васкамасăр кăна, комбайн çинчен анчĕ-тĕр ĕнтĕ, пысăккăн яра-яра пусса, ялалла утать пулĕ. Ун патне тата, ĕлĕкхи пек, Куляпа Ваçça та пыма пултарнă. Апла пулсан, вăл Ваççана çавăтнă-тăр, вĕсен умĕпе, ашшĕ пек хăлаçлама тăрăшса, Куля пырать пулĕ. Киле таврăнĕç те, каласса-кулса, виççĕш те пĕрле каçхи апат çиме ларĕç...

Вăл вара, Манюк, пĕччене...

Ав çав хăрăк тĕм пек, Авенариус лартнă упа паланĕн çара тĕмĕ пек, пĕччен...

1963.




Валерий ТИМОФЕЕВ

# ХĂРАТАКАННИ

Эпир кӳршĕри Ванюшпа туслă пурăнаттăмăр. Аттесем вăрçăра хыпарсăр çухалнăччĕ, аннесем фермăра ĕçлетчĕç. Манăн тата кукамай пурччĕ. Вăл пуррипе Ванюш умĕнче те çаплах мухтанаттăм. Ванюшран нумайрах пĕлетчĕ, вăл питĕ ăслăччĕ.

Пĕррехинче пирĕн аннесем вăрмана вут турттарма кайрĕç. Эпĕ вăраннă çĕре анне çукчĕ. Ман патăма Ванюш пычĕ. Вăл та амăшĕнчен çывăрса юлнă иккен. Хăйне питĕ мăнкăмăллă тытать. «Эсĕ мĕн,— тесшĕн ĕнтĕ вăл мана,—эпĕ вăт мăн çын. Мана анне пĕччен шанса хăварнă. Эсĕ кукамупа юлнă».

Эпир вара çав куна чăн-чăн арçынсем пек ирттерме калаçса татăлтăмăр. Чи малтанах пирĕнне вут çурмаллаччĕ. Анчах кукамай пуртă памарĕ, пĕрер ывăç ăшаланă тутлă кавăн тĕшши çеç сĕнчĕ. Ăна эпир часах çисе ятăмăр.

— Тата парсан, эпĕ каллех спасипă калăп,—терĕ Ванюш, кукамая тав туса.

Анчах кукамайăн урăх спасипă илтес килмерĕ курăнать: вăл пире тек кавăн тĕшши памарĕ.

Урама чупса тухрăмăр. Пытанмалла вылярăмăр, анчах паян ку пире çырлахтармарĕ.

— Пĕлетĕн-и, Петĕр?— терĕ мана Ванюш вăрттăн.— Урам тăрăх ĕçсĕр çапкаланса çӳременпĕр. Аннесем патне вăрмана каяпăр. Тен, тилхепе тытса килĕпĕр.

Ку шухăш мана çав тери килĕшрĕ. Эпир йăмра хулли хуçрăмăр, çул хĕрринчи вĕлтĕренсене «хĕçпе» касса пытăмăр. Тусанпа вылякан хĕрачасене тĕксе хăвартăмăр. Пирĕн çумра вĕсем чĕчĕ ачи кăна. Çичĕ çултах сакăр çухрăма çӳресе пăхчăр-ха! Тата пĕччен — вăрмана! Аха вĕт!

Вăрмана часах çитрĕмĕр. Вăл Ванюш аппăшĕ пурăнакан ялтан пĕр çухрăмра кăна. Эпир çарранах.

— Çĕлен курсан, мĕн тăвăпăр?— ыйтрăм эпĕ.

Ванюш вăрăм патак илчĕ. Унтан çĕре лач! сурчĕ. «Çĕлен пăнчăхрĕ»,— тени пулчĕ ку.

— Хăрушă мар! Хăрушă мар!— юрларăмăр эпир. Вăрмана чупса кĕрсе кайрăмăр.

— Çитет,— терĕ Ванюш чарăнса.— Шалалла шпион пулма пултарать.

— Эпир, каялла чупма хатĕрленсе, таврана тимлĕн сăнарăмăр. Лăпкă.

— Анне!— кăшкăрчĕ Ванюш.

— Анне!— мĕкĕртĕм эпĕ.

— Аннесем!— харăссăн кăшкăртăмăр эпир.

Пире хирĕç никам та чĕнмерĕ. Хĕвел вăрман хыçне анать те мĕн. Эпир, шикленнине палăртмасăр, вăрмантан тухрăмăр. Уйра хĕвел пур-ха.

— Петĕр,— терĕ мана Ванюш,— эпĕ аппа патĕнче çывăратăп. Ман аппа сан кукамунтан лайăх. Эсĕ киле кай.

Манăн макăрас килчĕ, анчах Ванюш ачаш теме пултарать. Эпир Ванюшпа уйрăлтăмăр. Пĕччен çул вăрăм иккен. Кичем. Хĕвел анса ларчĕ. Ăшă тусан çара ура айĕнче пăрлатать.

«Тăрук кашкăр сиксе тухсан»— шутласа илтĕм эпĕ. Ку мана шиклентерсе ячĕ. Тĕттĕмленет. Чăнах та пур-ши кашкăр вăл? Темле çутăсем мăчлатаççĕ. Çырманалла аннă пекех туйăнать. Э, ку ял çути-çке. Кашкăр пĕчĕк ачана çиет-ши?

Киле çитиччен пĕр çухрăмра ял пур. Унта кĕриччен каялла çаврăнса пăхсах чупрăм. Ялтан пĕрре те тухас килмест. Ма пирĕн пӳрт ку ялта мар-ши? Çурма çулта çеремлĕ вар тăсăлать. Çул ун хĕрринченех иртсе каять. Çав варта кашкăр пулсан? Ма кукамай хирĕç тухмасть-ши? Тинкерсе пăхнипе куç ыратакан пулчĕ. Чарăнса тăтăм. Итлетĕп. Сасартăк! Пăхатăп — вар пуçĕнче, ман çул çинче, упа ларать. Пы-ысăк, самăр упа. Шăп кĕнеке çинче курнă пекех. Ларнă та хăй айне пулă чикет те чикет...

Эпĕ çухăрса ятăм та яла çаврăнса чупрăм. Çул хĕрринчи пӳрте вăркăнса кĕтĕм. Çыннисем апат çиеççĕ.

— Мĕн пулчĕ, Петĕр?—ачашшăн ыйтрĕç вĕсем.

— Упа-а-а... Вар пуçĕнче упа пулă чиксе лара-ать,— ĕсĕклесе макăрса ятăм.

Вĕсем кулса илчĕç.

— Шутларăн пуль хытă. Тен, хăрарăн пĕччен? Таврара нимле упа та çук,— лăплантарчĕç вĕсем мана.

— Пур çав...—макăратăп эпĕ.

— Ну, юрĕ. Апат çиме килетĕн-и?

Хырăм питĕ выçнăччĕ. Вĕсем манран эпĕ ăçта пулнине тĕпчесе пĕлчĕç.

— Кукамуран ыйтмасăр юрать-и вара, айван,— терĕç.— Ванюша курсан, лайăх кăна вăрçатпăр-ха пĕрре, çула тухсан, юлташа кам пăрахать.

Киле мана Илле пичче леçсе ячĕ. Курăклă вар пуçĕнче нимĕнле упа та çук иккен. Унта эпир юриех анса пăхрăмăр.

Кĕркунне эпĕ упа «курни» çинчен учителе пĕлтертĕм. Вăл вара ачасене каласа кăтартрĕ.

— Вăрман вăл пысăк,— терĕ учитель.—Унта аннесем нумай. Ятран кăшкăрмалла. Юлташсене ниçта та ан пăрахăр. Туслăх вăл паха сăмах. Çĕр çинче нимле хăратакан та çук. Вăл пĕччен чух хытă хăранипе е шутланипе куç умне курăнать çеç. Çапла-и, Петĕр?

Эпир часах вăрмана класĕпех йĕкел пуçтарма кайрăмăр. Ванюш ман пата хăюсăррăн пырса тăчĕ.

— Урăх эпĕ ун пек тумăп,— терĕ вăл хурланчăклăн.—Юрать-и, Петĕр?

Эпир карçынккана иккĕн йăтрăмăр та лапсака юман патнелле утрăмăр.

Çав кун Ванюшпа иксĕмĕр йĕкел чи нумай пуçтараканнисем пултăмăр.

Петр ЯЛГИР



## ТĂВАН ÇĔРШЫВ

Урамра çилпе пуплеççĕ
Ешĕл тумлă йăмрасем;
Чĕвĕл кайăксем — итле çеç —
Янратаççĕ юрăсем.
Ку вăл ман Тăван çĕршыв!

Çил вĕрет те кассăн-кассăн,
Куç тулли тыр-пул кашлать.
Кунĕпех вăрман мăнаçлăн
Пĕлĕтпе тем канашлать.
Ку вăл ман Тăван çĕршыв!

Аякра мăн Улăп евĕр
Курăнаççĕ заводсем.
Ярăнаççĕ ӳркенмесĕр
Тӳпере самолетсем.
Ку вăл ман Тăван çĕршыв!



## ПИЧЧЕ

Килчĕ Микула пиччеçĕм
Виçĕмкун çар ретĕнчен.
Çăлтăрсем пекех çиçеççĕ
Орденсем кăкри çинче.

«Ылтăн çăлтăр» йăлтăр-ялтăр
Ялкăшать ытла хитрен.
Çитĕнсессĕн, пулăп паттăр,
Эп те юлмăп пиччерен.

Василий ДМИТРИЕВ

## САСĂ



Вăрманта аташнă Толя.
Толя кăшкăрать:
— А-у-у!
Куравлать такам:
— Кам ку-у!!
Вăрманта аташнă Толя,
Толя кăшкăрать:
— Эп Толя!
Сасă хуравлать:
— Эп Оля!
Вăрманта аташнă Толя.
Толя кăшкăрать:
— Эс кил!
Сасă хуравлать:
— Ху ки-ил!
Вăрманта аташнă Толя.
Толя кăшкăрать:
— Пыратăп!
Сасă хуравлать:
— Тăратăп!
Вăрмантан тухать те
Толя
Кăшкăрать вăл:
— Эс ăçта-а!
Сасă хуравлать:
— Таçта-а!

# Икĕ кахал

ТУТАР ХАЛĂХ ЮМАХĔ

Тахçан авал çут тĕнчере икĕ кахал пурăннă. Пĕррехинче вĕсем вăрмана каяççĕ. Çав вăрманта тутлă улма йывăççи ӳснĕ.

Кахалсем вăрман тăрăх чылайччен лапăстатса çӳреççĕ, юлашкинчен улмуççи патне çитсе тухаççĕ. Кунта вара аслă кахалĕ кĕçĕннине çапла калать:

— Атя-ха силлер çак улмуççие, тен, темиçе улма татăлса анĕ.

— Силлес килмест!— тесе тавăрать кĕçĕнни.— Улмуççи айĕнче выртар мар-и!

Вĕсем çапла тăваççĕ те. Улмуççи айĕнче чылайччен выртаççĕ. Часах аслă кахалăн хырăмĕ питĕ выçса каять:

— Эх, пан улми çăвара кĕрсе ӳкнĕ пулсан, мĕн тери лайăх пулнă пулĕччĕ!— тет вăл ĕмĕтленсе.

— Пан улми татăлса анас пулсан та, ăна чăмлас пулать-çке-ха. Çук, ку питĕ чăрмавлă!— тет кĕçĕнни.

Пĕр пан улми те çисе пăхаймасăрах кахалсем улмуççи айĕнчен тăрса утнă вара.

Хамăр колхозниксем пурте тенĕ пекех тухрĕç. Çапла ĕçлесен çĕнĕ пĕве часах хатĕр пулать... Пока, редактор юлташ... (Трубкине хурать те каллех хаçат вулама тытăнать.)

Ваçça кĕрет. Ансăр та кĕске брюки тăхăннă. Аллинче портфель.

Ваçça. Привет, Акакий Семеныч...

Акакий. Ваçça мар-и ку?

Ваçça. Самăй çавă...

Акакий. Епле улшăнса кайнă эс, урăх çĕрте курсан паллас та çук.

Ваçça. Çитĕнетпĕр, Акакий Семеныч, çитĕнетпĕр...

Акакий. Мĕн çăмăлпа пирĕн пата, Ваçça?

Ваçça. Сирĕн паян воскресник пулас?

Акакий. Çапла, çапла...

Ваçça. Çавна шута илсе, ĕçлекенсене культурнăй отдых парас тесе, филармони дирекцийĕ эстрадă бригади ячĕ сирĕн пата.

Акакий. Артист пулса каймарăн пулĕ те, Ваçça?

Ваçça. Эп дирекцийĕн уполномоченнăйĕ тата концертмейстер.

Акакий. Мĕн кăтартатăр-ха эсир?

Ваçça. Пирĕн программă пит обширнăй. Йытăсем ташлаççĕ, шутлаççĕ,ункă витĕр сикеççĕ. Тата тĕрлĕ акробатикă, ташă, юрă... Факир хĕç çăтать, халăх умĕнчех çын пуçне касать...

Акакий. Ну? Билет хаклă-и?

Ваçça. Сирĕн паян халăх нумай, клуба шăнăçас çук. Çавăнпа договор тумалла пулĕ, Акакий Семеныч? Урамра кăтартас.

Татюк чупса кĕрет.

Татюк. Ваçça пичи!..

Акакий. Хăш колхозран килчĕç, Татюк?

Татюк. «Победăран»...

Акакий. Миçе çын?

Татюк. Хĕрĕх.

Акакий (сырать). Охо! Мĕн чухлĕ халăх... Ну-и çамрăксем...

Татюк. Ваçça пичи, сана валли Шупашкарта шалпартарах брюки тупăнмарĕ-им?

Ваçça. Эх, шĕкĕнтĕр... Модă... Ну, Акакий Семеныч, договор çыратпăр-и?

Акакий. Эпĕ хирĕç мар, Ваçça, анчах председательпе калаçса татăлас пулать. Вăл пĕве пĕвеленĕ çĕрте.

Татюк. Концерт пулать-и, асатте?

Ваçça. Пулать, Татюк, пулать...

Татюк. Концерт пулать, концерт пулать.

Чупса тухса каять.

Ваçça. Ну, эпĕ Захар Захарычпа кайса калаçам эппин. (Кайма тăрать те каялла таврăнать.) Кала-ха, Акакий Семеныч, мĕншĕн сирĕн воскресник тăваççĕ? Ман концерт пуçланас умĕн филармони ячĕпе ĕçлекенсене саламлас пулать...

Акакий. Эй, Ваçça, эсĕ хаçат та вуламастăн пулас?

Ваçça. Юлашки кунсенче вуламан çав...

Акакий. Эпир çĕнĕ пĕве пĕвелеме шут тытрăмăр... Колхозниксем килĕшессе килĕшрĕç, анчах ĕçе килес çул çур аки пĕтерсен тытăнас терĕç. Иван çамрăксене пухрĕ те çапла, çапла терĕ, юшкăн пире кăçалах кирлĕ, унсăрăн çитес çулта вăйлă кукуруза ÿстерейместпĕр, терĕ. Çамрăксем хăйсен вăйĕпех çĕнĕ пĕве пĕвелеме тытăнчĕç. Вот воскресниксем пуçланчĕç... Ăнлантăн-и?

Ваçça. Ăнлантăм. Пултарать те Иван!..

Акакий. О, Иван вăл çĕр çĕмĕрет...

Ваçça. Ну, пока... (Каять) Салам, Крахьян инке.

Крахьян (сцена çине кĕрсе). Ку Катра Ваçça пулмарĕ пулĕ те?

Акакий. Çавă...

Крахьян. Епле улшăнса кайнă вăл...

Акакий. Эс ăçта пуçтараннă тата?

Крахьян. Епле ăçта? Комсомол воскресникне килтĕм.

Акакий. Мĕн-мĕн?

Крахьян (хытăрах). Комсомолецсене пĕве пĕвелеме пулăшас тетĕп, ват супнă!

Акакий. Крахьян, эсех-и ку?

Крахьян. Эпĕ пулмасан, кам пултăр тата?

Акакий. Кутăн çаврăн-ха... (Леш çаврăнать.) Хыçалтан та Крахьян пекех... Калле-малле уткала... (Леш утать.) Утти те унăнах. Чим, эсĕ кашни вырсарникун Çĕрпÿ пасарне çÿреттĕнччĕ мар-и?

Крахьян. Пăрахрăм пасара çÿреме...

Акакий. Каласамччĕ тархасшăн, мĕнле сан, леш, сознани текенни улшăнчĕ-и-ха, Крахьян?

Крахьян. Пирĕн Захар Захарыч такам сознанине те улăштарĕ...

Акакий. Аван, пит аван!.. Савăнăçлă хыпар!

Крахьян. Эс мĕн, Акакий Семеныч, эпĕ пĕтнĕ çын тетĕн-и? Эс мана лунеяцăсемпе ан танлаштар-ха...

Акакий. Мĕн-мĕн?..

Крахьян. Лунеяцăсемпе ан танлаштар, тетĕп!

Акакий. Лунеяцă мар, тунеяцă, теççĕ.

Крахьян. Пĕрех мар-и? Пурпĕр вĕсем ĕçлемесĕр çăкăр çиеççĕ...

Акакий. Ха!.. Хăçантанпа эс кунашкал калаçа пуçларăн?

Крахьян. Кашни кун правленине чĕнтерсе пăскăртсан, калаçăн...

Акакий. Юрать, юрать, сан сознани улшăнни уççăнах курăнать... Эс, воскреснике кайма тухрăн пулсан, мĕн çăмăлпа правленине килтĕн?

Крахьян. Çула май кĕтĕм...

Акакий. Çул май? Ку — Шупашкартан Мускава Аçтăрхан урлă кайни пулать...

Крахьян. Ан асăн-ха çав Аçтăрхана!..

Акакий. Ара, эсĕ çĕнĕ пĕвене хирĕçех пурăнатăн-çке.

Крахьян. Ман Захар Захарычпа калаçмалли пурччĕ те...

Акакий. Апла тути-çути хăть... Анчах вăл кунта çук.

Крахьян. Акакий Семеныч, кала-ха, мĕншĕн Захар Захарыч пĕччен пурăнать? Унăн çемьи çук-им?

Акакий. Çук çав...

Крахьян. Вăл авланман-им?

Акакий. Авланасса авланнă та... Вăрçă пуçлансан, хăйсен ирĕкĕпе иккĕшĕ те фронта кайнă... Арăмĕ сестра пулнă... Захар Захарыч таврăннă, арăмĕ...

Крахьян. Ах, мĕскĕн... Арăмне юратнă пулĕ çав, халиччен авланман.

Акакий. Эсĕ мĕн, Агрипина Петровна, çын пурнăçĕпе интересленме пуçларăн?

Крахьян. Ара, хĕрхенес килет-çке Захар Захарыча. Выçăллă-тутăллă пурăнать. Эс, калаçса пăх-ха унпа, хама аван мар, ман пата пурăнма куçтăр... Эп ăна апат та пĕçерсе парăттăм...

Акакий. Калаçса пăхăп. Сан шатрун çурт... Пĕр пÿрчĕ пушах ларать.

Крахьян. Эс Захар Захарыч ăçта терĕн çак?

Акакий. Ăçта пултăр, пĕве пĕвеленĕ çĕрте.

Крахьян. Ну, эпĕ каям-ха эппин. (Тухса каять. Телефон шăнкăртаттарать.)

Акакий (трубкине илсе). Алло... «Çулăм» мар «Çăлтăр»...

Иван чупса кĕрет. Аллинче хаçат.

Иван. Тупăнчĕ, тупăнчĕ, тупăнчĕ, Акакий Семеныч... Ой, тупăнчĕ...

Акакий. Мĕн тупăнчĕ, кам тупăнчĕ?

Иван. Çухалнă Марине тупăнчĕ...

Акакий. Ăçта вăл?

Иван. Акă. Шупашкарта, крановщица. (Хаçат кăтартать.)

Акакий. Чăнах та Марине... Ударницă... Ах, хĕрĕм, хĕрĕм...

Иван. Акакий Семеныч, ыранах Шупашкара каятпăр. Эс пыратăн-и?

Акакий. Пыратăп, пыратăп. (Иккĕшĕ те хаçат çине тăрăнаççĕ.)

Марине кĕрет. Лешсем курмаççĕ.

Марине. Сывă çÿреççĕ-и пурте!

Иван. Марине!..

Акакий. Хĕрĕм (Маринене ыталать).

Иван. Марине, эс паянхи хаçата вуланă-и?

Марине. Вуламан-ха...

Иван. Акă, кур.

Марине. Ай-уй! Ман сăна пичетленĕ.

Иван. Сăнна та пичетленĕ, ăçта, мĕнле ĕçлени çинчен те çырнă.

Акакий. Аннÿне куртăн-и?

Марине. Анне килте çукчĕ.

Акакий. Эс отпуска килтĕн-и, хĕрĕм?

Марине. Çук, асатте, висĕ кунлăха çеç ячĕç. Сире, хамăн тантăшсене, курас килчĕ.

Акакий. Эп аннÿне кайса савăнтарам-ха...

Иван. Марине, эсех-и ку?

Марине. Эпĕ-çке...

Маринене скамье çине лартать. Иван — унпа юнашар.

Иван. Кала-ха, Марине, мĕншĕн эс ху Шупашкарта ĕçлени çинчен никама та пĕлтермерĕн? Ман пата çырма кăмăлу пулман пулсан, аннÿсене пĕлтермеллеччĕ. Пурте пăшăрханаççĕ... Сан аннÿ мар, ман анне те канăçне çухатрĕ... Хам çинчен каламастăп та ĕнтĕ... Кашни кун çыру кĕтеттĕм... Хусана та шăнкăртаттарса пăхрăм.

Марине. Сан пата темиçе çыру та çыртăм, анчах пĕрне те ямарăм.

Иван. Мĕншĕн?

Марине. Эсĕ çиленнĕ пулĕ терĕм. Чăнах та, эп сана кÿрентертĕм çав... Айван пулнă-çке эп. Каçар мана, Ванюк!..

Иван. Пăрах ун çинчен калаçма, вăл иртсе кайнă ĕнтĕ...

Марине. Кала-ха, Ванюк, эп киле таврăнсан, ял-йышсем манран кулмĕç-и?

Иван. Мĕншĕн кулмалла?

Марине. Актриса пулма кайнă Марине крановщицăра ĕçленĕ темĕç-и?

Иван (кĕсйинчен хаçат кăларса). Ку тата кам?

Марине. Эпĕ.

Иван. Сан çумăнти?

Марине. Тава тивĕçлĕ актрисă.

Иван. Ун çумĕнчи?

Марине. Дояркă...

Иван. Крановщицă, актрисă, дояркă! Сăнĕсем юнашарах... Висçĕшне те мухтаççĕ, висççĕшĕ те тăван çĕршывшăн пысăк ĕç тăваççĕ, висççĕшĕ те чаплă çынсем. Паян сан сăнна хаçатра курсан, ялйышсем кулма мар, ку пирĕн Марине тесе мухтанчĕç...

Марине. Манпа мухтанмаллиех çук-ха... Ак эсĕ чăнласах пысăк ĕç пуçарса янă...

Иван. Эпĕ мар, комсомолецсем...

Марине. Эс ытла та сăпайлă, Ванюк...

Иван. Марине, эс яла таврăнсан терĕн... Яла таврăнма шухăш пур-и сан?

Марине. Тем тумалла ĕнтĕ...

Иван. Таврăн, Марине, часрах таврăн.

Марине. Хăратăп, Ванюк... Те таврăнмалла, те таврăнмалла мар.

Иван. Мĕнрен хăратăн?

Марине. Эс, тен, урăх хĕре юратса пăрахнă пулĕ...

Иван (сиксе тăрать). Мĕн эс, каллех манран кулма килтĕн-и? Эс ялтан кайнăранпа ыйăха çухатрăм... Ăнсăртран çывăрса кайсан, тĕлĕкре те сана çех кураттăм... Урăх хĕр!.. Урăх хĕрсем те пур ялта, те çук, эп вĕсене курмастăп...

Марине (Иван патне пырса). Лăплан, Ванюк... Эп ахаль çех калартăм... Пĕлетĕп эс ун пек ача мар... Килессе те сана курас тесех килтĕм...

Иван. Таврăн, Марине, таврăн... Сансăр пуçне çав тери кичем мана.

Марине. Таврăнатăп, Ванюк. Пуçланă çурта туса пĕтерсенех расчет илетĕп...

Иван. Ой, Марине! Мĕншĕн эп сана вилес пек юрататăп-ши?

Тарьепе Акакий кĕреççĕ.

Тарье. Марине таврăннă терĕç те, килсе курас терĕм... Сывă-и хĕрĕм?

Марине. Сывах-ха, Тарье аки...

Акакий. Иван, экскаваторщика больницăна ăсатрăмăр...

Иван. Мĕн пулнă ăна?

Акакий. Аллине амантнă, халĕ экскаваторпа ĕçлекен çук.

Иван. Ак, инкек! Мĕн тăвасха ĕнтĕ? Завода шăнкăртаттарас — никама та тупас çук, вырсарникун.

Марине. Экскаваторпа эп ĕçлеме пултаратăп, Ванюк...

Иван. Чăнах-и? Ой, Марине... Апла пулсан, каяр... (Тухса каяççĕ.)

Тарье (вĕсем хыççăн пăхса). Эх, кинĕм Марине пекки пулсанччĕ.

Акакий. Эпир те Иван пек кĕрÿ çинчен ĕмĕтленетпĕр те-ха...

Чаршав.

## УЛТТĂМĔШ КАРТИНА

Чаршав умĕнче «Чух, чух» кăшкăрса Татюк тухать. Унталла-кунталла пăхса илет те, каллех «Чух, чух»— тесе кăшкăрать. «Ăçтан шыраса тупмалла ман ку шуйттан сыснине», тесе макăрса ярать те, ларать. Макăрать, макăрать те каллех «Чух, чух!»— тесе илет.

Сценă хыçĕнче Петюк юрлани илтĕнсе каять. Юрă çывхарнăçемĕн çывхарать. Кăшт тăрсан çав енченех Петюк тухать, хулпуççи урлă вăрăм пушă.

Петюк (Тăмăкĕ патне пырса). Эс мĕн макăрса ларатăн?

те асăрхамарĕç ĕнтĕ — вĕсем умĕнче михĕ йăтнă çын утать, мĕнех вара уншăн! Пурте утаççĕ вĕт!

Анчах Данияр трап патне çитнĕ чух Джамиля ăна хăваласа çитрĕ.

— Пăрах миххуне, эпĕ шӳт турăм кăна вĕт!

— Кай!— пат татса каласа хучĕ те Данияр трап тăрăх утрĕ.

— Пăх-ха, йăтса пырать!— хăйне тӳрре кăларнă пек каларĕ Джамиля.

Вăл халĕ те-ха хуллен кулкаларĕ, анчах унăн кулли улшăнса, ĕненмелле мар пулса пычĕ, вăл хăйне юри култарнă пек туйăнчĕ.

Эпир Данияр хăйĕн аманнă урипе хытăрах уксахлама пуçланине асăрхарăмăр. Мĕнле-ха кун çинчен эпир малтанах шутламан! Çак таранччен те хама хам çак ухмахла шӳтшĕн каçарма пултараймастăп, куна вĕт эпĕ шухăшласа кăлартăм, тăмпуç!

— Таврăн!— кăшкăрчĕ Джамиля хавассăр кулăпа хутăш.

Анчах Данияр халь тин таврăнма пултарайман ĕнтĕ: ун хыçĕнчен ытти çынсем утса пынă.

Малалла мĕн пулнине эпĕ лайăххăн астăваймастăп та. Эпĕ темĕн пысăкăш михĕ айĕнче авăнса ларнă Данияра, унăн усăнса аннă пуçне, çыртса лартнă тутине куртăм. Вăл вăраххăн, аманнă урипе малалла питĕ асăрханса ярса пусса утрĕ. Кашни пусăмах ăна тӳсме çук ыраттарчĕ пулмалла, ма тесен кашнинчех пуçĕпе ывăтса илсе самантлăха чарăнса тăчĕ. Тата мĕн тери çӳлерех хăпарса пычĕ — çав тери хытăрах енчен енне сулăнчĕ. Ăна михĕ сулăнтарчĕ. Мана вара калама çук хăрушă та намăс пулчĕ, манăн пыр та типсе ларчĕ. Хăранипе хытнă пек пулса, эпĕ хамăн пĕтĕм шăммăм-шаккăмпа Данияр йăтса пынă михĕ йывăрăшне, унăн аманнă ури ыратнине туйрăм. Акă, вăл каллех сулăнса кайрĕ, пуçĕпе сулса илчĕ, вара манăн куççем хуралса килчĕç, умри пур япаласем те сиккелеме тытăнчĕç, ура айĕнчи çĕр те таçталла шуса кайрĕ.

Эпĕ хамăн алла такам сасартăк çав тери хыттăн, шăмăсем те ыратмалла пăчăртанипе тăна кĕтĕм. Джамиляна эпĕ тӳрех палласа та илеймерĕм. Вăл шап-шур шурса кайнăччĕ, куçĕсене хăрушла чарса пăрахнă, нумаях та пулмасть кулнă тутисем халĕ те сике-сике илеççĕ. Халĕ вара пĕр эпир кăна мар, кунта пулнисем пурте, вăл шутрах приемщик те трап вĕçĕ патне чупса пырса пухăнчĕç. Данияр тата икĕ утăм турĕ, çурăмĕ çинчи миххе тӳрлетме пикенчĕ те — вăраххăн авăнса чĕркуçленсе ларма пуçларĕ. Джамиля питне аллисемпе хупласа тытрĕ.

— Пăрах! Пăрах миххине!— кăшкăрчĕ вăл.

Анчах Данияр миххе темшĕн пăрахмарĕ. Ăна ĕнтĕ паçăрах хăяккăн пăрăнса трап çинчен аяккалла ывăтма май пурччĕ, хысалтан утакансене çапса ӳкерместчĕ вăл. Джамиля сассине илтсен, Данияр пĕтĕм кĕлеткипе малалла туртăнчĕ, авăннă урине тӳрлетрĕ, тата тепĕр утăм ярса пусрĕ, анчах çав самантра каллех сулăнса кайрĕ.

— Пăрах теççĕ сана, пăрах, анчăк ывăлĕ!—кăшкăрса ячĕ приемщик.

— Пăрах!— кăшкăрчĕç ытти çынсем те.

Анчах Данияр хальхинче те тӳссе ирттерчĕ, ӳкмерĕ.

— Çук, вăл пăрахмастех ĕнтĕ!— çирĕп ĕненсе пăшăлтатса илчĕ тахăшĕ.

Вара пурте — трап тăрăх ун хыçĕнчен утакансем те, аялта тăракансем те ăнланчĕç пулас: Данияр михĕпе пĕрле хăй ӳкмесен, вăл ăна пăрахмастех. Çав тери шăп пулса килчĕ. Стена хыçĕнче, тул енче, пăравус хыттăн шăхăртса иртрĕ.



Данияр çаплах, ăстăнне çухатнă пек, çуртăн хĕрсе çитнĕ тимĕр çийĕ айĕн, трап хăмисене авăнтарса, çӳлтен çӳле хăпарса пычĕ. Кашни икĕ утăмранах вăл, сулкаланма тытăнса, чарăнса тăчĕ, унтан кăштах вăй пухса, малалла утрĕ. Хыçалтан пыраканнисем унăн уттипе майлашăнма тăрăшрĕç, вăл чарăнсан, вĕсем те чарăнса тăчĕç. Ку çынсене те çав тери ывăнтарчĕ, вĕсем халран кайрĕç, анчах никам та çиленмерĕ, Данияра вăрçакан пулмарĕ. Пĕр-пĕринчен куçа курăнман вĕренпе çыхăннă пек, çынсем хăйсен йывăр миххисене йăтса хăрушă, шуçлак сукмакпа утнă пек пычĕç. Кун пек çĕрте пĕрин пурнăçĕ теприн пурнăçĕнчен килет. Вĕсем пĕр-пĕринпе сăмахсăрах калаçса татăлнă пек пулчĕç — пĕр çемĕпе пычĕç. Акă, вĕсем Данияр хыççăн пĕр утăм, тата тепĕр утăм тăваççĕ. Данияр хыçĕнченех пыракан салтак арăмĕ ун çине мĕн тери асаплăн, ӳкĕтлесе, шăлĕсене çырт-

са пăхрĕ! Унăн хăйĕн те урисем авăна-авăна анчĕç, анчах хăй ăшĕнче вăл Данияршăн кĕл турĕ.

Ĕнтĕ нумай та юлмарĕ — кĕçех трапăн чăнкă енĕ пĕтет. Анчах Данияр каллех сулăнса кайрĕ, аманнă ури ăна пăхăнма пăрахрĕ. Миххине пăрахса ямасан, вăл халь тесен халь аялалла татăлса анма пултарать.

— Чуп! Хыçалтан пырса тыт!— кăшкăрчĕ мана Джамиля. Хăй вара, çухалса кайса, Данияра кунтанах пулăшма пултарнă пек, аллисене малалла тăсрĕ.

Эпĕ трап тăрăх çӳлелле ыткăнтăм. Çынсемпе михĕсем хушшипе хĕсĕнсе, Данияр патне чупса çитрĕм. Вăл ман çине хăйĕн чавси айĕпе пăхса илчĕ. Унăн хуралса кайнă йĕп-йĕпе çамки çинче тем хулăмăш юн тымарĕсем палăрса тăратчĕç, юнпа тулнă куçĕсем ман çине çав тери хаяррăн пăхса çунтарса илчĕç. Эпĕ миххе тытма пикентĕм.

— Кай!— çилĕпе хăйăлтатса илчĕ те Данияр малалла утрĕ.

Данияр йывăррăн сывласа, хăрах урипе уксахласа аяла ансан, унăн аллисем кантрасем пек çакăнса тăратчĕç. Пурте ăна çул парса ик еннелле сирĕлчĕç, приемщикĕ вара чăтса тăраймарĕ, кăшкăрса ячĕ:

— Эсĕ мĕн, каччă, ухмаха ертĕн-и! Эпĕ мĕн, çын мар-им, эп сана тыррине аяла тăкма ирĕк памастăмччĕ-им! Мĕн тума йăтатăн эс ун пек михĕсене!

— Ку вăл хамăн ĕç,— хуллентереххĕн хуравларĕ Данияр.

Вăл аяккалла сурчĕ те бричкă патнелле кайрĕ. Эпир вара ун çине пăхма та хăяймарăмăр. Намăс та пулчĕ тата. Данияр эпир ухмахла шӳт тунине çакăн пекех чĕре патне илнĕшĕн тарăхас та килчĕ.

Çĕр каçипех эпир ним чĕнмесĕр пытăмăр. Данияршăн пулсан вăл нимех те мар-ха, хăнăхнă йăла. Çавăнпа та эпир ăнланма та пултараймарăмăр — çиленнĕ-и вăл пирĕн çине е пĕтĕмпех манса та кайнă! Анчах çапах та пире йывăр пулчĕ, пирĕн ăш вăркарĕ.

Ирхине, эпир итем çине тырă тиенĕ чух, Джамиля çав эсрел миххине илчĕ те, ун хăрах хĕррине урипе пусса, ăна шатăрах çурса пăрахрĕ.

— Ме хăвăн лапра пирне!—Вăл çĕтĕк миххе тĕлĕнсе кайнă весовщицă ури патне ывăтрĕ.— Тата бригадира кала: иккĕмĕш хут кун пеккисене хурса ан патăр!

— Мĕн ара эс! Мĕн пулнă сана!

— Нимĕн те пулман!

Тепĕр кунне кунĕпех Данияр хăй кӳреннине нимĕнпе те палăртмарĕ, хăйне пĕр пек тикĕс тытрĕ, калаçмарĕ, ытти чухнехинчен ытларах уксахларĕ кăна, уйрăмах ку вăл михĕ йăтнă чух палăрчĕ. Ĕнер вăл суранне хытах хускатнă пулмалла çав. Çакă вара пĕрмаях эпир ун умĕнче айăплă пулнине аса илтерчĕ. Анчах çапах та вăл кулса янă е шӳт туса илнĕ пулсан пире çăмăлтарах пулатчĕ — эпир пĕр-пĕринпе килĕштерменни çавăнпа манăç пулатчĕ те ĕнтĕ.

Джамиля та ытлашши нимĕн те пулса иртмен пек кăтартма тăрăшрĕ. Мăн кăмăллăскер, вăл кулатчĕ пулсан та, эпĕ унăн туйăмĕсем кунĕпех йĕркеллĕ пулманнине куртăм.

Станцирен эпир каçа юлса таврăнтăмăр. Данияр малта пычĕ. Каçĕ вара тĕлĕнмелле ырăччĕ. Кам пĕлмест пуль август уйăхĕнчи çӳллĕ, çав вăхăтрах çывăх, калама та çук çутă çăлтăрлă каççене! Кашни çăлтăр куçа курăнса тăрать. Акă вĕсенчен пĕри, хĕррисем паслаииă пек курăнаканскер, пăр пек пĕчĕк çутăсемпе ялкăшса тăраканскер, тĕттĕм пĕлĕтрен çĕрелле айванла тĕлĕннĕн пăхать. Эпир икĕ чăнкă сăрт хушшипе пыратпăр та, эпĕ çав çăлтăр çине нумайччен пăхрăм. Лашасем кил еннелле юртсах пычĕç, урапа кустăрмисем айĕнче вак чул кăчăртатрĕ. Çил çеçен хиртен армутин йӳçĕ тусанне, сивĕнсе пыракан пиçнĕ тырăн аран уйăрса илмелле шăршине вĕçтерсе пычĕ, çаксем вара, тихĕт шăршипе тата хăмăт-пăявсен тарлă шăршипе хутăшса, кăштах пуçа çавăрчĕç.

Çулăн пĕр енче йĕпплĕ хулă йывăçĕсем ӳссе ларнă, ĕмĕлпе хупланнă сăртсем кĕпĕрленсе мăкăрăлнă, тепĕр енче, таçта аялта, хăвалăхпа вăрманти лутра топольсем питĕ сăра ӳссе ларнă çĕрте, лăпланма пĕлмен Куркуреу кăпăкланса тăчĕ. Сайра хутра таçта хыçалта кĕпер урлă поездсем кĕмсĕртетсе иртрĕç те вĕсен кустăрмисем шакăлтатни тахçанччен илтĕнчĕ.

Сулхăнрах сывлăшра пыма, лашасен пĕр майлă хускалакан çурăмĕсем çине пăхма, августри каçăн шăплăхне итлеме, унăн шăршисене шăршлама питĕ кăмăллă пулчĕ. Джамиля манран малта пычĕ. Тилхеписене пăрахса, вăл енчен-енне пăхкаларĕ те хуллен кăна темскер юрларĕ. Ăнлантăм эпĕ — эпир шарламасăр пыни унăн кăмăлне хусрĕ. Кун пек каçхине шарламасăр тăма май çук çав, кун пек каçхине юрлас килет!

Вара вăл юрласа ячĕ. Тен, вăл Даниярпа пирĕн хушăмăрта малтанхи пек кăмăллă çыхăну пултăр, хăй ун умĕнче айăплă пулнине туйса тăнине сирсе ярас тесе юрлама тытăнчĕ пулĕ. Сасси унăн усă, янравлă та хĕрӳллĕччĕ, юрласса вăл аилти ахаль юрăсенех, «Пурçăн тутăр сулăп эп сана» е «Ман савнийĕм инçетри çул çинче» тенĕ пеккисене юрларĕ. Юррисене вăл нумай пĕлнĕ, вĕсене пурне те питĕ илемлĕ, чĕре патне пымалла юрларĕ те ăна итлеме кăмăллă пулчĕ. Анчах унтан сасартăк юрлама чарăнчĕ те Данияра хыттăн кăшкăрса каларĕ:

— Эй, Данияр, юрласа парасчĕ санăн мĕн те пулин! Джигит-и эсĕ, кам-и!

— Юрла, Джамиля, юрла!— нимĕнле мар пулса сас пачĕ ăна хирĕç Данияр, лашисене кăштах чарса.— Эп итлетĕп сана, ик хăлхана та чăнках тăратрăм.

— А эсĕ мĕн, пирĕн хăлхасем çук тетĕн-им! Мĕнех вара эппин, кăмăлу çук пулсан — кирлĕ мар!— Джамиля çапла каларĕ те каллех юрласа ячĕ.

Кам пĕлет, мĕншĕн юрлама ыйтрĕ вăл ăна! Тен, ыт-ахальтен кăна, тен, ăна юриех калаçтарма тытăнас тесе! Нимрен те ытларах, Джамилян унпа калаçасси килчĕ пуль, мĕншĕн тесен кăштах вăхăт иртсен вăл ăна каллех кăшкăрчĕ:

— Кала-ха, Данияр, эсĕ хăçан та пулин юратса курнă-и!— Хăй çавăнтах кулса ячĕ.

Данияр ăна хирĕç нимĕн те каламарĕ. Джамиля та шарлами пулчĕ. «Тупнă камран юрлама ыйтмаллине!»— хам ăшра кулса илтĕм эпĕ.

Çул урлă каçакан пĕчĕк кăна юхан шыв патне çитсен, хăйсен таканĕсемпе кĕмĕл тĕслĕн курăнакан чулсем çийĕн чаклаттарса, лашасем хуллентерех утрĕç. Эпир шыв урлă каçсан вара Данияр лашасене пушăпа туртса илчĕ те кĕтмен çĕртен тăкăскăрах сасăпа юрласа ячĕ:

Манăн тусем, кăвак-шурă тусем,
Ман асаттесен, аттесен çĕрĕ-шывĕ!

Лакăмсем тĕлĕнче унăн сасси чĕтренсе илчĕ, унтан вăл тăрук ÿсĕрме пуçларĕ, анчах ÿсĕрес килни иртсе кайсанах вăл юррăн юлашки икĕ йĕркине кăкăртан тухакан, анчах кăштах хăйăлтатакан çăра сасăпа юрласа пĕтерчĕ:

Манăн тусем, кăвак тусем,
Эсир манăн сăпка...

Çак тĕлте вăл каллех, темрен хăранă пек, тăпах чарăнчĕ те шарлами пулчĕ.

Эпĕ вăл мĕнле именсе кайнине хам куç умĕнчи пекех куртăм. Анчах вăл çакăн пек хăюсăр, тытăна-тытăна юрланинче те темле питĕ пăлханулла япала пурччĕ, унăн сасси те лайăх пулнă пулмалла, ку чăнах та Данияр пулнине ĕненес те килмерĕ.

— Пăх-ха эс ăна!— тÿссе тăраймарăм эпĕ.

Джамиля кăшкăрса илчĕ:

— Ăçта пулнă-ха эс ку таранччен! Ну, юрла ĕнтĕ, юрла лайăхрах!

Малта çутă курăнса кайрĕ — икĕ сăрт хушшинчен айлăма тухмалли вырăна çите пуçларăмăр. Унтан варкăш çил вĕрме пуçларĕ. Данияр каллех юрласа ячĕ. Малтан вăл паçăрхи пекех хăюсăр, хăйне шанман пекрех пуçларĕ, анчах майĕпен унăн сасси вăй илсе пычĕ, пĕтĕм икĕ сăрт хушшине тултарчĕ, инçетри чул тусем патĕнче янраса илтĕнчĕ.

Пуринчен ытла мана вăл юрлакан кĕвĕ çав тери хĕрÿллĕ, вут-хĕмлĕ туйăмпа тулни тĕлĕнтерчĕ. Эп çакна мĕнле ятпа каламаллине те пĕлмерĕм, халĕ те пĕлместĕп, тĕрĕсрех каласан — ăна палăртма та пултараймастăп: ку вăл сасă кăна пулчĕ-и е унтан паллăрах вырăн йышăнса тăраканни, этем чунĕнчен тухаканни, тепĕр çынна пăлхатса яма, чи вăрттăн та хаклă шухăшсене те чĕртсе яма пултаракан япала пулчĕ,— пĕлместĕп.

Эп мĕн чухлĕ те пулин Данияр юррине ун майлăрах юрласа пама пултарсассăнччĕ! Унăн юрринче сăмахсем çукпа пĕрехчĕ, сăмахсăрах вăл этемĕн пысăк чунне уçса пама пултаратчĕ. Унччен малтан та, ун хыççăн та эпĕ ун пек юрă нихçан та илтмен: вăл ни кăркăс, ни казах кĕввисем пек марччĕ, анчах çав вăхăтрах унта ку та, лешĕ те пурччĕ. Данияр музыки икĕ тăван халăхăн чи лайăх кĕввисене пĕрлештерне те вĕсене урăх нихçан та пулма пултарайман юрă туса çыхăнтарнă. Ку вăл сăрт-тусемпе çеçен хирсен юрри пулнă, пĕрре вăл кăркăс тăвĕсем пек янраса хăпаратчĕ, тепре казах çеçен хирĕсем пек анлăн сарăлса каятчĕ.

Эп ăна итлесе çав тери тĕлĕнсе пытăм: «Акă мĕнлескер иккен вăл, Данияр! Кам шухăшлама пултарнă-ха вăл çакăн пек çын тесе!»

Эпир ĕнтĕ нумай çынсем çÿренĕ çемçе çул тăрăх пытăмăр. Данияр юрри халь пур еннелле те сарăлса кайрĕ, çĕнĕрен çĕнĕ кĕвĕсем, пĕрин хыççăн тепри, тĕлĕнмелле çемçен улшăнса пычĕç. Неушлĕ вăл çав териех пуян! Мĕн пулса иртнĕ унпа! Вăл хăйĕн кунĕ, хăйĕн сехечĕ çитессе кĕтсе пурăннă, тейĕн.

Сасартăк эпĕ унăн çынсене тĕлĕнтернĕ тата вĕсене кулма сăлтав туса панă тĕлĕнтермĕшĕсене — вăл темле ĕмĕтленсе пурăннине, пĕччен пулма юратнине, çынсемпе калаçманнине ăнланса илтĕм. Халĕ эпĕ вăл мĕн пирки кашни каç хурал сăрчĕ çинче ларса ирттернине тата юхан шыв хĕрринче çĕрĕпех пĕр-пĕччен пулнине, мĕншĕн ыттисем илтеймен сасăсене тинкерсе итленине тата унăн куçĕсем сасартăк çуталса кайнине, куç харшисем тăрук темрен сыхланнă пек çÿлелле çĕкленнине ăнлантăм. Вăл пĕтĕм чун-чĕререн юратса пăрахнă çын пулнă. Тата вăл — эп ăна туяттăм — ахаль урăх çынна юратса пăрахнă çеç мар; ку вăл темĕнле урăхла, калама та çук пысăк юрату — пурнăçа, çĕре юратни пулнă. Çапла çав, тĕрĕс, вăл çак юратăва хăйĕн ăшĕнче, хăйĕн музыкинче упраса усранă, вăл çав юратупа пурăннă. Юратман çын, пĕр пек лăпкă кăмăлпа пурăнакан çын, унăн сасси темле лайăх пулсан та, çакăн пек юрлама пултарайман.

Юррăн юлашки янравĕ те сÿнсе ларнă пек туйăннă вăхăтра унăн çĕнĕ пăлханулла çĕкленĕвĕ тĕлĕрсе выртакан çеçен хире тепĕр хут вăратнă пек турĕ. Вара çеçен хир, хăйĕн тăван кĕввине илтсе ачашланнăскер, юрăçа тав тунăн итлерĕ. Хăйсене вырасса кĕтекен пиçсе çитнĕ, саралса кайнă тырăсем анлă юхан шыв пек чÿхенчĕç, ир пулас умĕнхи çутăсем хир тăрăх сиккелесе илчĕç. Арман патĕнчи ватă çÿçесен хăватлă ушкăнĕ çулçисемпе чăштăртатрĕ, пысăках мар юхан шыв леш енче хирти стансенчи кăвайтсем çунса пĕтсе пычĕç, тахăшĕ мĕлке пек, пĕр сассăр, çыран хĕррипе аил еннелле юланпа ыткăнчĕ, вăл пĕрре садсем хушшинче çухалчĕ, тепре каллех курăнчĕ. Çил вăл енчен пан улми шăршине, чечекленекен кукурузăн сĕтлĕ пыл шăршине тата типсе пыракан кизякăн ăшă сывлăшне вĕçтерсе килчĕ.

*(Юлашки пулать)*

---

## Çамрăксен сасси

*Виталий* ***СОКОЛОВ***

### ЮРАТНĂ ЯЛĂМ-ЙЫШĂМА

Эп пилĕк çул тăван ялта пулман.
Хăш-пĕр чухне, мана аса илсе,
Ял-йыш калать пуль: «Кĕт ăна
халь, шан,—
Çын манчĕ çав çуралнă кĕтесе...»
Эп пилĕк çул тăван ялта пулман.

Йăмраллă ял текех тухать ума,
Асран каймасть кунта та, инçере.
Çулла яшсем васкаç пуль урама,
Эп çамрăк чухнехи пек, каçсерен.
Йăмраллă ял текех тухать ума.

Яш-кĕрĕмсем нумай пуль халь ялта,
Вĕсем ĕçре, тен, пирĕн пек патвар.
Пĕлетĕп эп: колхозăмăр малта,
Кăвар чĕреллĕ çамрăксем хастар—
Яш-кĕрĕмсем нумай пуль халь ялта.

Ял-йышăма курасчĕ ман çитсе—
Ак отпуска пыратăп çак çулла.
Тахçанхилле йышра эп тимлесех
Сирĕнпеле ут çулăп шуçăмлах.
Ял-йышăма курасчĕ ман çитсе.

Куратăп авкаланчăк çут Выла,
Шыва кайса кĕретĕп ир-ирех.
Вăлта илсе çÿреп унта пулла—
Ытараймп хитре-хитре çĕре.
Куратăп авкаланчăк çут Выла.

Юратрăм ялăн йывăç-курăкне,
Хирти çăра тыр калчине савса
Ман чуп тăвас килет-çке. Вĕсене
Хампа пĕрле çÿрес килет йăтса,
Юратрăм ялăн йывăç-курăкне.

Ваттисемпе сăпай калаçăп, шеп.
Хам тусăмсен ачи-пăчисене
Утья-утья туса сиктерĕп эп,
Пăхса килленĕп çамрăккисене.
Ваттисемпе сăпай калаçăп, шеп.

Тăван ял-йыш ăшши хампа пĕрлех,
Хитрелĕх илсе килчĕ Çĕпĕре.
Кунта та чăвашри пекех илем —
Татах савас килет ман çак çĕре,
Тăван ял-йыш ăшши хампа пĕрлех.

*Аристарх* ***ДМИТРИЕВ***

### КУРАК ЙĂВИ

Лаштра йăмра çине
такам юри
персе çакăтнă çăмлă çĕлĕке
аса илтерекен
курак йăви
паян та килчĕ
манăн тĕлĕке.

...Хам шĕпĕн çеç.
Пуçа каçăртнăран
тин çеç кĕрешнĕ пек
сурать ĕнсе.
Йăва çине пăхатăп мĕн таран,
пĕр тĕлĕнсе, тепре иккĕленсе.

Пĕлетĕп-ха унта мĕн пуррине —
Тăватă-пилĕк пĕчĕк çăмарта.
Çапах та куçупа
ху курнине
мĕнех çитме пултарĕ-ха тата?

Пит кăсăк çав.
Тата çитменнине
ăшра кăштах каппаясси те пур,
савăнтаратăп ĕнтĕ аннене:
«Ах,— тетĕр,— ман ача епле маттур!»

Çитет пăхса!
Шăп чĕркуççи таран
йĕм пĕççине ал-хапăл тавăрса,
тапаçланма пуçлатăп пур вăйран,
ÿтне юн тухиччен шăйăрттарса.

Ур-ра! Турат çине пусать ура.
Халь ĕнтĕ
картлашка пекех ансат:
турат айне
пулса юлать турат.
Çÿлтен-çÿле васкатăп пăлханса.

Курак йăви —
тăвата çăмарта.
Тивмерĕм, хăтланмарăм сăтăрла.
Чарусăр çил те,
шалкăм çумăр та
аркатайман пулсассăн —
лартăрах.

Эс ан пăлхан,
хура курак,
шăпах
пусса ларса
чĕппÿсене кăлар.
Усалшăн мар кĕрешрĕм йăмрапа,
сăлтав кунта
пачах йăвара мар.

Сăлтавĕ — урăх:
этемпе пĕрле
çуралатех хăравçăлăх тени,
ăна пăчлантарма вара кирлех
пĕр-пĕр курак йăви
çÿле чĕнни.

Халь çук манра
хăрас-тăвас йăла,
хăюллăн тинкеретĕп тÿпене.
Умри тĕллев —
йăмра çинчи йăва.
Эп тавăратăп йĕм пĕççисене.

*Вениамин* ***ТИМАКОВ***

### ÇĔНĔ ÇУРТ

Хĕвел вырнаçтарать
чи çирĕп арматурă
çĕкленекен мăн çурт стени çине.
Ай, йăлтăркка çути ытла маттур ун,
кĕрсе юлать кашни кирпĕч айне.

Кайран ку çутă
пÿлĕме çутатĕ,
çурт тăвакан кулли пек çĕкленсе.
Тирпейлĕ пÿлĕмре экран кăтартĕ
таçта каллех çурт тунине хĕрсе.

# ТРУБИНА МАРХВИН ЮЛАШКИ КАЛАВĔСЕМ

*Çуралнăранпа 75 çул тултарнине асăнса*

Юлашки çулсенче Трубина Мархви «Ача чухнехи» повеçсĕр пуçне тата икĕ повеç («Ольга Ивановна», «Вăрçă çулĕсем»), ача-пăча калавĕсем çырнă, чăваш юмахĕсене вырăсла кăларма куçарнă, педагогикă ăслăлăхĕпе докладсем, лекцисем хатĕрленĕ. Йывăр чирне пăхмасăр хĕрсе ĕçленĕ писательницă.

Чылайăшĕ çырăнса пĕтеймесĕрех юлнă. Вĕсем пурте халĕ ал-çыру халлĕн Чăваш ăслăлăхĕпе тĕпчев институчĕн архивĕнче упранаççĕ.

Пирĕн хисеплĕ писательницă çырнисем пурте хăй вăхăтĕнче вулакансем умне тухĕç. Халлĕхе эпир вăл юлашки çулĕсенче ачасем валли çырса хăварнă хăш-пĕр калавĕсене пĕрремĕш хут пичетлетпĕр. Ку произведенисене М. Трубина кашнинех ик-виçĕ хут урăхлата урăхлата юсаса çырнă, хăшĕсене тасан куçарса хунă та каллех тӳрлетнĕ. Вĕсене çырса пĕтернĕ тесе шутлайман пулас вăл. Çапах та çак калавсене вулакансем — çамрăккисем те, çитĕннисем те — хисеплесе йышăнĕç.

Трубина произведенийĕсенчи яланхилле ăса вĕрентни, унăн хăйне уйрăм сăнарĕсемпе ӳкерчĕксем кунта та каллех чĕрĕлсе тăраççĕ, кăмăла туртаççĕ. Пĕчĕкçеç калавсенче эпир ăста педагог-çыравçă этеме пысăк чĕрепе юратнине туятпăр, вăл ĕç çыннин пурнăç хыван вăй-хăватне сӳнми ĕмĕтпе шаннине куратпăр.

В. КАНЮКОВ,
филологи наукисен кандидачĕ.

### ГЕРОЙ

Шăнкăрав сасси илтĕнчĕ. Ачасем классенчен тухма тытăнчĕç. Улттăмĕш класра вĕренекен Ваçук коридор тăрăх чупса кайрĕ. Хытă чупать. Ачасем хушшинче хура пуçĕ вĕлт-вĕлт çеç курăнать. Ак вăл пĕр ачана пырса перĕнчĕ, пĕчĕкрех хĕрачана кăмака çумне çапăнтарчĕ, хăйне тытса чарас тесе пынă ачасене чышса ячĕ. Çăри-çари, шăйшай илтĕнчĕ. Коридор вĕçĕнче Ваçука ачасем хупăрласа тытса чарчĕç.

— Мĕншĕн иртĕхетĕн?— терĕç вĕсем.

— Сире мĕн ĕç?—чăрсăррăн каларĕ Ваçук.

— Сан çинчен звенора, отрядра ыйту лартатпăр,— терĕç лешĕсем.

— Лартăр,— аллине сĕлтрĕ Ваçук,— эпĕ сирĕн йышши мар.

— Кам вара эсĕ?

— Каммине эп ӳссен курăр акă.

Çав вăхăтра шкул технички, Анук аппа, коридора икĕ витрепе шыв йăтса кĕчĕ, ватăрахскер, бак патнелле майĕпе утса пырать. Ваçук хăйне тытса тăракан ачасене кĕтмен çĕртен тĕртсе ячĕ те коридор тăрăх каялла вăркăнчĕ, Анук çине пырса тăрăнчĕ. Анук сулăнса кайса ӳкрĕ, витресенчи шыв шĕл! турĕ.

— Ай! Пĕтрĕм!— йынăшса ячĕ хĕрарăм, аран-аран тăчĕ, йĕпе тумтирлĕскер, уксахласа çтена çумĕнчи тенкел çине пырса ларчĕ.

Ачасем Ваçука хупăрларĕç, кĕрлесе кайрĕç.

— Мĕн турăн эс, Ваçук?

— Каçару ыйт Анук аппаран!

— Ăсса кил шыв!

Ваçук хурлăхан пек куçĕпе юлташĕсем çине мăн кăмăллăн пăхса илчĕ, нимĕн те чĕнмерĕ. Хăй ăшĕнче вăл çапла шухăшларĕ: «Хă, тупнă техничкăна хисепе хурса унтан каçару ыйтма. Эпĕ ытти ачасем пек-и... Çук!.. Ӳссен эпĕ Совет Союзĕн Геройĕ пулатăп. Мĕн мана техничкă... Шыв ăсса кил теççĕ тата...»

Çапла шухăшласа Ваçук кăшт пăхналаса тăчĕ те класа хăвăрт кĕрсе сумкине çакса тухрĕ.

— Ăçта каятăн, Ваçук? Уроксем пĕтменçке,— терĕç ачасем.

— Киле каятăп,— терĕ Ваçук ним пулман пек,— сӳтсе-явăр ман çинчен урок хыççăн.

— Эх, хăравçă!— терĕ пĕр ача.— Иртĕхме пĕлет, хăй çинчен сăмах тапратасран хăрать.

Ваçук пальтине, çĕлĕкне тăхăнчĕ те тухса кайрĕ. Ун хыççăн Анук мăшăр витре йăтса тухрĕ, пусă патнелле уксахласа утрĕ.

Ваçук шкул карти хĕррипе хуллен пырать. Урамăн леш айккипе çар çынни килнине курчĕ. Ылттăн погонлă вăрăм шинель, çăлтăрлă картус тăхăннă. Утнă çемĕн çутă аттисем кĕрхи хĕвел çинче йăлтăртатаççĕ. Ваçук чарăнсах пăхса тăчĕ. Ку çын кам иккенне палларĕ: хăйсен ял çынни — Совет Союзĕн Геройĕ. Ваçук çак çын çине савăнса, куçне илмесĕр пăхать.

Офицер пусăран шыв ăсса тăракан Анук тĕлне çитрĕ, ăна сывлăх сунса картусне илсе пуç тайрĕ. «Сывă-и, Анук аппа?»—тесе алă тытрĕ.

— Сывах-ха. Ху мĕнле пурăнатăн, ачам? Курма килтĕн пулĕ,—терĕ Анук.

— Курма килтĕм, Анук аппа. Атте-аннене, ял-йыша курманни чылай пулать.

— Халĕ ăçта каятăн?

— Шкула каятăп. Хама вĕрентее çын тунă учительсене курас килет.

Çапла калаçса тăнă хушăра Анук пусăран шыв ăсрĕ, тулли витресене йăтса пĕр-иккĕ ярса пусрĕ, ури ыратнипе уксахласа илчĕ.

— Анук аппа, санăн уру ыратать-çке, кӳр мана витресене, хам йăтса каям,—терĕ офицер, вăйлă аллисемпе йывăр витресене çăмăллăн йăтрĕ те шкулалла утрĕ.

Çавна курса тăракан Ваçук пичĕ-куçĕ вут пек пĕçерсе кайнине туйрĕ. Карта хĕрринче кăшт тăрсан, вăл шкулалла кайрĕ.

### УÇМАН КĔНЕКЕ

Кăвак çӳçлĕ Варвара Николаевна чылайранпа библиотекăра ĕçлет. Аслăрах классенче вĕренекенсене вăл кĕнекесем каçхине парать, тăваттăмĕш класран пуçласа ытти кĕçĕн классене — кăнтăрла. Вĕсем хăйсен урокĕсем пĕтсенех библиотекăна пухăнаççĕ. Варвара Николаевна шкапсене уçать. Мĕнле кĕнеке çук кунта! Хулăннисем те, çӳхисем те, кивvисем те, çĕннисем те пит нумай. Вула кăмăл туличчен. Ялан ăшă пит-куçлă библиотекарь ачасене кĕнеке вулама хавхалантарать.

— Вулăр, ачасем, пĕлӳ пухăр. Кам нумай вулать, çав нумай пĕлет, тенĕ аслă писатель Пушкин,— тет вăл хăш чух.

Кашни класăн ку вĕренӳ çулĕнче вуласа тухмалли кĕнекесен спискине Варвара Николаевна стена çумне çырса çапнă. Ачасем çав списока пăхса хăйсене мĕнле кĕнеке кирлине суйласа илеççĕ.

Вуласа тухнă кĕнекесене каялла панă чух, Варвара Николаевна ачасенчен час-часах произведенисен кĕске содержанине ыйтать, тĕп шухăшĕ çинчен ыйтусем парать, произведенири çынсем çинчен калаçусем ирттерет. Ачасем шăп пулса итлесе лараççĕ. Вĕсем библиотекăна пухăнма ялан хавас.

Кам миçе кĕнеке вуланине библиотекарь шута илсе пырать. Списокне çырса стена çумне çапать.

Виççĕмĕш класра вĕренекен Сантăр Кашкаров пек кĕнеке нумай вулакан класĕпе те çук. Ун çинчен Варвара Николаевна стена хаçачĕ çине те çырнă. Вуласа тухнă кĕнекен содержанине ыйтсан, Сантăр «шыв пек» каласа парать. Шкултан тухса ачасемпе килелле утнă чух вăл кĕнекесем çинчен сăмахлама юратать.

Кăçал кĕркуннеренпе тата виççĕмĕш класра вĕренекен хĕрача Иванова Юля кĕнеке нумай вулама тытăнчĕ. Юля кĕнеке вулассипе Сантăртан юлмасть теççĕ ачасем. Юлашки уйăхра список тăрăх Юля вуланă кĕнекесен шучĕ Сантăринне çитнĕ.

Районти библиотекă çамрăк вулавçăсен слетне ирттересси çинчен пĕлсен, Сантăр хумханса кайрĕ. Манăн каясчĕ унта. Эпĕ нумай вулатăп, мана унта яма тивĕç, тесе шухăшларĕ вăл. Паллах ĕнтĕ, кĕнекесене наянланса вулакан ачана вулавçăсен слетне ямĕç.

Пĕррехинче Сантăр кĕнеке вулакансен списокне пăхрĕ те пит хытă кăмăлсăрланса кайрĕ: ку уйăхра Юля Сантăртан тăвата кĕнеке ытларах вуланă иккен.

«Юля, кĕнеке нумай вуласа, çамрăк вулакансен слетне каясшăн пулмалла,— шутларĕ хăй ăшĕнче Сантăр,—çук, кĕнеке нумай вулассипе эпех малта пулăп, курăпăр-ха».

Пĕррехинче яланхи пек уроксем хыççăн ачасем библиотекăра кĕнеке илеççĕ. Сантăр мала пырса тăнă. Вуласа тухнă кĕнекине умĕнче тытса тăрать. Варвара Николаевна унăн кĕнекине илчĕ.

— Паян хăш кĕнекене илес тетĕн?— ыйтрĕ библиотекарь.

— Акă çакна,— тĕллерĕ Сантăр.

Варвара Николаевна ача кăтартнă кĕнекене илчĕ. Хуплашки çинче Ленинăн ача чухнехи сăнĕ. Библиотекăра кĕнекене алăра тытса пĕр самант шухăша кайса тăчĕ те пӳлĕмне кĕрсе кайрĕ. Унтан вăл часах тухрĕ. Сантăр çине кăмăллă пăхса ăна кĕнеке тыттарчĕ.

— Вула, Сантăр. Кĕнеки пит аван. Владимир Ильич ача чухнехи çинчен çырнă.

— Вулатăп. Аван кĕнекене алăран пăрахас килмест,—терĕ ача, кĕнекине сумкине чикрĕ те, пуç тайса, «сывă пулăр» тесе тухса кайрĕ.

Тепĕр кун Сантăр ĕнер илнĕ кĕнекене библиотекăна илсе пынă. Варвара Николаевна умне пырса тăнă.

— Вуласа тухрăн та-и?— ыйтрĕ Варвара Николаевна.

— Тухрăм. Ытарма çук аван кĕнеке, вуласа савăнтăм.

— Кĕнекен ăшĕнче нимĕн те курмарăн-и?

— Çук, нимĕн те курмарăм.

Варвара Николаевна ача çине сăнаса пăхрĕ. Хĕвел хура пĕлĕтпе хупăрланнă пек унăн ăшă пит-куçĕ сивĕкленчĕ:

— Виçĕмкун педсовещани пулса иртрĕ. Слета, эпĕ сĕннипе, виççĕмĕш класран сана яма йышăннă, справкă панă. Ĕнер эпĕ ăна çак кенеке ăшне хутăм, вуланă чух тупса слета каймаллишĕн савăнтăр терĕм. Эсĕ кĕнекене уçса пăхман иккен, ху вуласа тухрăм тесе суйрăн.

Çапла каласа Варвара Николаевна кĕнеке ăшĕнчен машинкăпа пичетленĕ хут кăларчĕ. «Акă вăл справкă»,—терĕ.

Кĕнеке илсе пĕтерсен, ачасем тухса кайрĕç. Сантăр çаплах пуçне чиксе тăрать. Варвара Николаевна ун патне пычĕ.

— Сантăр, мĕншĕн эсĕ кĕнекене вуласа тухрăм тесе суйрăн?

Ача хумханса каларĕ:

— Юля вуласа тухнă кĕнекесен шучĕ манăнчен ытларах... Ăна слета яма пултараççĕ... Юльăпа танлашас тесе, эпĕ кĕнекене вуламасăрах васкаса килсе парас терĕм... Ман слета кайса курас килет...

Варвара Николаевна пĕр самантлăха шухăша кайса тăчĕ.

— Ĕнтĕ сана суйнăшăн слета ямĕç. Кун пирки директорпа калаçса пăхмалла,—терĕ библиотекарь.

Шкапсене питĕрсе вăл тумланчĕ. Куççульне шăлкаласа Сантăр Варвара Николаевнăпа пĕрле библиотекăран тухрĕ, килнелле хуллен утса кайрĕ.

Тепĕр кун канмалли пулчĕ. Слета яма уйăрнă ачасем шкул умне пухăннă. Акă машинă кĕрлесе килчĕ, çавăнса тăчĕ. Ачасем ларчĕç те вĕçтерчĕç. Сантăр машинă сассине илтсе урама, хăйсен умне, тухрĕ. Машинă çинче ытти ачасем хушшинче Юля ларса пынине хурлăхлă пăхса юлчĕ, ассăн сывласа илсе хăйсен хапхинчен кĕрсе кайрĕ.

Хурăн çине çакăнса,
Хама хамах вĕлерес.

Кун хыççăн тепĕр листара «Ырă хыпар сарăлăн?» тенĕ, тĕрлĕ цифрăсем çырса кайнă. Листан тепĕр енче юсаса çитермен çакăн пек икĕ строфа пур:

Ана ĕлĕк вĕрентни
Асне килсе хуйхăртнă.
Аслă çынсем калани
Халĕ пуçне хуйхăртнă.
Елĕк илтнĕ сăмахсем
Унăн чунне хуйхăртнă,
Ăна аслă ватăсем
Ун чух çапла вĕрентнĕ:

Пĕрремĕш йĕркери «вĕрентни» сăмах вырăнне малтан «ача чух» пулнă, ăна хуратнă, тăваттăмĕш йĕркине пĕтĕмпех туртса пăрахнă, улттăмĕш йĕрке малтан «халĕ пуç-

Тайăр Тимкки çакна лайăх ăнланнă: хăватлă кĕрешĕве мĕн пур халăхсем пĕрле тухмалла, пĕрлĕхлĕ, пĕр шухăшлă пулмалла, уйрăммăн çапăçмалла мар, мĕншĕн тесен, пĕр харампырне пĕтерсен, ун вырăнне тепĕр харампырĕ йышăнать, лешĕнчен ытларах тискерлĕх кăтартма пултарать. Пĕрерĕн-пĕрерĕн вĕлерсе пĕтерес çук вĕсене.

Çакă вăл хресченсене уйрăмах тивĕçет. Вĕсен пурте пĕрле вăранассишĕн уйрăмах тăрăшмалла, кĕрешĕве тухма вăхăт çитнине лайăх пĕлсе тăмалла. Кĕрешӳре хресченсемшĕн рабочи класс çулпуç пулмалла.

Тетрадьри 26-мĕш листан тепĕр енче çакăн пек сăвă вулатпăр:

Каш-каш вăрман сасси илтĕнет.

Çамрăк чĕре сисмерĕ.
Улька, Улька, асăнса,
Мана çаплах çыру яр.
Çапах мана шеллесе,
Асăнмасăр ан хăвар.
Улька, Улька, астусам,
Çула иккĕн çӳрени.
Иртрĕç курнă савăнăçсем,
Иртрĕ Телей, Савăнни.
Сана эпĕ чуптăвап,
Сана эпĕ юратап.
Кăкăр çумне ыталап,
Нимĕн тăва пĕлместĕп.
Çула çыран варринче
Эпир иккĕн ларатпăр...

Мĕнле таса та вăйлă юрату! Поэт кунта Улька ятлă хĕре чунтан-вартан юратнине питĕ лайăх кăтартса панă. Юратакансем ниме те пăхмаççĕ, чĕре туйăмĕсене икĕ

ша тытăмне тĕп тума, аркатса тăкма чĕннĕ. Хушса юрламаллине те поэт хăй еверлĕ куçарнă.

Патша тытăмне пĕтĕм чун хавалĕпе кураймасăр тăнă поэта революционер сăнарĕ интереслентернĕ. Акă, тепĕр юрра вырăсларан куçарма тытăннă вăл.

Тусанлă çулпа пĕр урапа пырать,
Икĕ енчен салтаксем лараççĕ.
Татăр сăнчăра,
Ярăр ирĕке.
Эпĕ сире ирĕке
Вĕрентĕп.
Унта пĕр çамрăк çынна илсе
пыраççĕ.
Татăр сăнчăра,
Ярăр ирĕке.
Сире эпĕ ирĕке...

# АРХИВРА ВЫРТНĂ СĂВВИСЕМ

не» сăмахсемпе пуçланнă. Шухăш енчен икĕ строфа та пĕр пекрех. Иккĕмĕш строфи малтанхине юсаса çырни пулас.

«Каçхи сасă» сăввипе те поэт чылай ĕçлени курăнать. Иккĕмĕш строфара мĕнле улшăнусем туни çинче кăна чарăнса тăрар. Малтан ăна çапла çырнă вăл:

Çамрăк çынсен сассисем
Çырма тăрăх сарăлнă.
Вĕсен çамрăк пуçĕсем
Телей курса савăннă.

Çак сăмахсене темиçе хут юсанă, кайранхи икĕ йĕркине мала лартнă.

Сăвва пĕтĕмпех илсе кăтартар.

## КАÇХИ САСĂ

Каçхи сасă чарăнчĕ,
Кăштăн-кăштăн çил вĕрет.
Хура çумăр пĕлĕчĕ
Ушкăн-ушкăн юхкалать.
Таçта çамрăк ачасем
Савнăç юрри юрланă.
Вĕсен аван сассисем
Çырма тăрăх янранă.
Çапла каçхи вăхăтра
Таçта пĕр çын йынăшнă.
Унăн чунĕ хуйхăра
Этем пĕлми хурланнă.
Çыннăн ĕмĕр тертленни,
Эсĕ хăçан чарăнăн?
Хăçан эсĕ чаранни
Ырă хыпар сарăлăн?

Тертлĕ кун вĕçленнĕ ĕнтĕ, каçхи шăв-шав та чарăннă, пĕр ушкăн çамрăк çеç савăнăç юрри юрласа çӳренĕ.

Çук, каçхи шăплăх та пусарайман çын йынăшнине. Çав йынăшакан çыннăн чунĕ пысăк хуйхăра иккен, вăл «этем пĕлми хурланнă».

Çын ĕмĕр-ĕмĕр тертленни, хуйхăрни, йынăшни эсĕ хăçан чарăнан?— тарăхса ыйтать поэт. Çав тертлĕ пурнăç пĕтни çинчен хăçан ырă хыпар сарăлĕ-ши?

Тайăр Тимккин çакăн пек виçĕ йĕркине пĕлеттĕмĕр эпир.

Атьăр, тăвансем, ан хăрăр,—
Хамăр çĕршĕн тăрăшар,
Уншăн çапăçса вилер.

Вĕсем çак тетрадьре пур. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш йĕркесем хушшине вырăн хăварнă, унта тепĕр йĕрке çырса лартма шутланă пулас поэт. 25-мĕш листара — хресченсене чĕнсе каланă тепĕр виçĕ йĕрке. Вĕсене кăранташпа çырнă та, виç йĕркине те кăранташпах чĕрсе хунă. Акă вăл йĕркесем:

Вăхăт çитрĕ, хресченсем,
Ура çине хăпарăр!
Пурте пĕрле вăранăр!

Мĕншĕн хытă кашлать-ши
Çав вăрман?
Шав-шав халăх сасси илтĕнет.
Мĕншĕн хытă шавлать-ши
Çав халăх?
Шавлать-çке халăх шавлама,
Ĕмĕт кĕтет вăйлă патшаран.

Кунта тата тепĕр йышши çынсем. Вĕсем шавлаççĕ, калаçаççĕ, тем кĕтеççĕ. Анчах та чăн-чăн кĕрешĕве тухмаççĕ. Шавласса та шавлаççĕ, пусмăр йĕркисемпе те килĕшмеççĕ. Апла пулсан ирĕклĕ пурнăçа ăçтан илесшĕн-ха вĕсем? Вăйлă патша пулăшасса кĕтеççĕ иккен.

Акă мĕнле шухăш килсе тухать сăвва вуласан: шавламалла кăна мар, вăйлă патшаран ĕмĕт те кĕтмелле мар, хăватлă кĕрешĕве тухмалла, патша тытăмне тĕп тумалла.

Ятсăр тепĕр строфара поэт асап кăтартакан усал çынна пĕтĕм чунчĕререн ылханать. Кам-ха вăл ку çĕрти хура юнлă çын, асап кăтартакан? Вăл паллă — патша, улпутсем тата ытти тӳре-шарасем. Çав йăх-яхсене яланлăхах тупăка хупасшăн та ĕнтĕ поэт. Унтан вара çав хура юнтан урăх «никам асап ан куртăр».

Çухал, çухал ку çĕртен,
Сана тупăк хуплатăр.
Санăн хура юнăнтан
Никам асап ан куртăр.

Пĕрремĕш йĕрке малтан «Çухал, çухал ман умран» пулнă, кăранташпа çырнине чернилпа «ку çĕртен» тесе тӳрлетсе хунă.

Акă тата тепĕр уйрăм строфа:

Усал çынсенĕн телейлĕ кунĕсем,
Пире хĕсĕрлеме чарăнĕç.
Вĕсен вăйлă сыхлакан патшисем,
Вĕсен умĕсенчен çухалĕç.

Тайăр Тимкки лирикăлла сăвăсем те çырнă. Çак жанрта та эпир унăн пысăк пултарулăхне куратпăр. Вăл Улька ятлă хĕре халаллаласа сăвă çырнине пĕлеттĕмĕр эпир. 8-мĕш листан тепĕр енче çакăн пек йĕркесем вулатпăр:

Улька, сана асăнса,
Эпĕ çыру яратăп.
Аван сăмах (шухăш) каласа,
Санăн питне чуптăвап.

«Сăмах» вырăнне малтан «шухăш» пулнă.

18-мĕш листара вара Улька çинчен малалла калани пур.

Эпĕ ĕлĕк çамрăк чух,
Хĕрпе вăхăт ирттертĕм.
Манăн шухăш çăмăл чух,
Чунтан вартан юратрăм.
Анчах мĕскер пуласса
Манăн шухăш пулмарĕ.
Малта хуйхă курасса

хире-хирĕçле тĕнче хушшинчи çӳллĕ хӳме те чараймасть, варлисем малашне мĕн пуласси çинчен те шухăшламаççĕ, çамрăк чĕре малта хуйхă курассине те сисмест. Анчах та мул тĕнчи хайĕннех тăвать, таса юрату туйăмĕсене ăнланма пултараймасть вăл, çав туйăмсене таптаса тăкма, варлисен ĕмĕтне пĕтерсе хума та вăй пур-ха унăн. Çапла вара, чĕрере паллă йĕр хăварса, Телей те, Савăнни те иртсе каять. Анчах юрату вилмест. Ăна çĕнекен вăй çук тĕнчере.

Тайăр Тимкки революциллĕ юрăсене вырăсларан чылай куçарнă. Тетрадь çинче «Интернационал» пуçламăшĕ пур. «Тăрăр, ылханпа пĕтнĕ çынсем»—тенĕ поэт малтанхи йĕркене. «Варшавянкăра» чылай сăмахсене улăштарнă, хăйĕнчен çĕнĕ шухăшсем кĕртнĕ.

«Варшавянка» юрра поляк чĕлхинчен В. И. Ленин соратникĕсенчен пĕри — Г. М. Кржижановский 1897 çулта куçарнă. Ун чухне вăл Бутырск тĕрминче поляк революционерĕсемпе пĕр камерăра ларнă. Юрра вырăс рабочийĕсем кăмăлласах йышăннă. Тайăр Тимкки ăна чăвашла 1907 çулта куçарнă пулмалла.

«Отречемся от старого мира...» юрра рабочисем: ку пирĕн «Марсельеза», тенĕ, ăна юратсах юрланă. Çакна Максим Горький «Амăшĕ» романра лайăх кăтартса панă, унта рабочисем Майăн пĕрремĕшĕнчи демонстрацире «Марсельезă» юрлаççĕ.

Çак юрра куçарнă чухне вара поэт-тăлмачă, Тайăр, юрăри хăш-пĕр вырăнсене палăрмаллах вăйлатнă. «Нам не надо златого кумира, ненавистен нам царский чертог», тенĕ йĕркесене вăл çакăн пек çĕнĕ шухăш кĕртнĕ: Пире «ылтăн кĕлетке кирлĕ мар, патша çутă çуртĕ тĕп пултăр». Вырăсла патша çуртне кураймасăр тăни çинчен каланă пулсан, чăвашла юрăри вара пат-

Сăвă çакăнпа таталать. Вĕçлесе çитермен ăна. Анчах та эпир кунта революционер сăнарне лайăх куратпăр. Ирĕклĕхшĕн кĕрешекен пĕр çамрăк çынна «патша йыттисем» тытса илнĕ те сăнчăрласа инçе çула ăсатаççĕ. Ăна урапа çине лартнă, икĕ енчен те салтаксем сыхласа пыраççĕ. Урапа такăр çулпа мар, тусанлă çулпа пырать. Çамрăк революционер тарăхать, пĕтĕм чун-хавалĕпе сăнчăра татма, хăйне ирĕке яма ыйтать. Хăйне ирĕке янипе çеç те лăпланмĕччĕ-



# ХАЛЬХИ ПУРНĂÇА КĂТАРТСА ПАРАКАН НУМАЙ АКТЛĂ ЧИ ЛАЙĂХ ПЬЕСĂСЕН КОНКУРСНЕ ИРТТЕРЕССИ ÇИНЧЕН

## КОНКУРС ТĔЛЛЕВĔ

Чăваш драматургине малалла аталанма пулăшас, республикăри профессилле тата пултарулăх театрĕсемпе ача-пăчасен кружокĕсем валли пысăк идейăллă та паха драмăллă произведенисем çырас сăлтавпа Чăваш АССР Культура министерствипе Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕ хальхи пурнăçа кăтартса паракан нумай актлă чи лайăх пьесăсен конкурсне ирттереççĕ.

Конкурса хальхи пурнăç çинчен çырнă драмăллă произведенисене йышăнаççĕ. Конкурса тăратнă пьесăсен идейăллă содержанийĕ çĕнĕ çынна коммунизм тăвакансен мораль кодексĕнче вĕрентнĕ пек воспитани парасси пулмалла. Çав пьесăсем совет çыннисен миршĕн, коммунизм обществи тăвассишĕн пыракан кĕрешӳне ытларах палăртса тăма тивĕçлĕ. Партипе правительствă коммунизмăн пурлăхпа техникă никĕсне хывас тĕлĕшпе йышăннă решенийĕсене хăвăртрах пурнăçа кĕртессишĕн ку чухнехи çынсем паттăррăн ĕçленине тата вăя шеллемесĕр кĕрешнине сăнласа парасси — конкурса тăратнă драмăллă произведенисемшĕн чи кирли. Совет патриотизмне, коммунистсен ĕçри хастарлăхне, çынсен ăс-тăнĕнче кивĕ пурнăçран юлнă киревсĕр йăла-йĕркесене хирĕç пыракан кĕрешӳри пархатарлă ĕçне-хĕлне, промышленноçпа ял хуçалăхĕнче, транспортра, наукăпа техникăра тата культурă енĕпе ĕçлекен çынсен мухтавлă ĕçĕсене, çавнашкалах тата ку чухнехи пурнăçшăн паллă пулса тăракан ытти темăсене те конкурса хутшăнакансем хăйсен произведенийĕсенче анлăн çутатса пама пултараççĕ.

Пирĕн вăхăтри геройăн ыттисемшĕн вĕренсе пыма тивĕçлĕ, çынсене ĕçпе кĕрешӳре паттăрлăх кăтартма хавхалантаракан пархатарлă сăнарĕ конкурса валли çырнă пьесăсенче тĕп вырăн йышăнса тăмалла.

## КОНКУРС УСЛОВИЙĔСЕМ

1. Конкурса писатель-драматургсем çеç мар, драматурги енĕпе хăйсен вăйне тĕрĕслесе пăхма кăмăл тăвакансем пурте хутшăнма пултараççĕ.

2. Конкурса кирек мĕнле жанрпа çырнă нумай актлă пьесăсене те (драмă, трагеди, комеди т. ыт. те) йышăнаççĕ. Анчах çав произведени унччен пичетленсе тухнă пулсан е ăна сценă çинче лартнă пулсан, ăна конкурса йышăнмаççĕ.

3. Конкурс хупă пулать. Авторсен ал çырăвĕсене машинкăпа пичетлесе хăйсен чăн ятне кăтартмасăр, девиз лартса, пĕр экземпляр ярса памалла. Ал çыру авторĕн хушаматне, ятне, ашшĕ ятне тата адресне лайăх çыпăçтарнă уйрăм пакет ăшне чиксе ямалла.

4. Конкурс 1963 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1964 çулхи августăн 1-мĕшĕччен пырать. Ал çырăвĕсене 1964 çулхи августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

5. Чи лайăх драмăллă произведенисемшĕн çакăн пек премисем параççĕ:

Пĕрремĕш преми пĕрре — 700 тенкĕ.

Иккĕмĕш преми иккĕ — 500-шер тенкĕ.

Виççĕмĕш преми иккĕ — 300-шер тенкĕ.

Хавхалантармалли преми иккĕ — 200-шер тенкĕ.

6. Конкурса тăратнă драмăллă произведенисене пăхса тухма тата чи лайăх пьесăсемшĕн премисем пама Чăваш АССР Культура министерствипе Чăваш писателĕсен Союзĕн Правленийĕ конкурс жюрине туса çирĕплетнĕ.

Жюри йышăннă решени татăклă пулать.

7. Конкурса тăратнă драмăллă произведенисене, вĕсем идейăпа ăсталăх енчен çырлахтараççĕ пулсан, жюри килĕшнипе, конкурс хупăнниччен-ех, авторăн девизне кăтартса, республикăри театрсенче лартма пултараççĕ.

8. Преми илме тивĕçлех пулайман, анчах идейăпа ăсталăх тĕлĕшĕнчен начар мар пулсан, конкурса тăратнă пьесăсене, жюри сĕннипе, театрсем сценă çинче лартма илме пултараççĕ.

Ал çырăвĕсене конкурса çак адреспа ярса памалла: г. Чебоксары, Дом Советов, Министерство культуры Чувашской АССР.

9. Конкурс жюрине çак çынсене кĕртнĕ: Л. Я. Агаков, В. О. Алагер, Б. А. Алексеев, К. И. Ванюшкин (председатель), А. Е. Алга, Г. А. Ефимов (председатель заместителĕ), И. Д. Краснов (секретарь), Б. С. Марков, Ф. А. Романова, М. Я. Сироткин, З. Д. Ярдыкова.

*Журнал хуплашкин пĕрремĕш страницинче: Чăваш халăх артисче, паллă драматург И. С. Максимов-Кошкинский.*

*А. ПРИПАЛОВ ӳкерчĕ.*


**Хаклă вулакансем!**

*1964 çулшăн „ЯЛАВ“ журнала çырăнса илме ан манăр*

**„ЯЛАВ“**

Чăваш совет писателĕсен Союзĕ уйăхра пĕрре кăларакан илемлĕ литературă тата обществăпа политикă журналĕ

*ХАКĔ:*

*Çулталăка — 2 тенкĕ те 40 пус,*
*6 уйăха — 1 тенкĕ те 20 пус,*
*3 уйăха — 60 пус,*
*Уйрăм номерĕ — 20 пус.*

Республикă тулашĕнче пурăнакансем подпискă укçине çак адреспа ярса пама пултараççĕ:
*г. Чебоксары, Дом связи, „Союзпечать“.*



ЯЛАВ № 9 (407)
СЕНТЯБРЬ — 1963

ЕЖЕМЕСЯЧНЫЙ ИЛЛЮСТРИРОВАННЫЙ ЛИТЕРАТУРНО-ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ И ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКИЙ ЖУРНАЛ СОЮЗА ПИСАТЕЛЕЙ ЧУВАШИИ.
ИЗДАТЕЛЬ: ЧУВАШСКОЕ КНИЖНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО

Редактор: Г. Ф. Орлов. Редколлегия: В. О. Алагер, И. Г. Григорьев, Г. А. Ефимов, В. Я. Канюков, И. Д. Кузнецов, А. В. Лукин, П. К. Львов (отв. секретарь), П. П. Хузангай.

*Рукописи не возвращаются.*

НТ 03745. Подписано к печати 2. IX. 1963 г. Объем 6,17 п. л. Формат 70×108 1/16. Тираж 30.500 экз. Заказ № 2679. Цена 20 коп.

Адрес редакции: Чувашская АССР, г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 1. Телеф. 8—36.

*Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.*



Индекс 73581